4272
49-5

С. К. КОРОТКОВ

# СТАЛИН ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН КОЛХОЗĂН ĔÇРИ ОПЫЧĔ



С. К. КОРОТКОВ

# СТАЛИН ЯЧĔПЕ ТĂРАКАН КОЛХОЗ ĔÇĔН ОПЫЧĔ

ОБЯЗАТЕЛЬНЫЙ ЭКЗЕМПЛЯР
ДОСТАВЛЕН
Чувашской Книжной Палаты
28 января 1949 г.
№ 22

*ЧĂВАШСЕН ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ*
*Шупашкар — 1949*

## УМСАМАХ

Социализмлă Ĕç Геройĕ С. К. Коротков кĕнеки Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхоз ĕçĕпе тĕплĕн паллаштарать. Халиччен эпир малта пыракан колхозсем хуçалăхпа организаци тĕлĕшпе тăвакан ĕçри опытсене çителĕклĕ таран çутатса паман-ха. Ялхуçалăх отраçлĕсенчи пĕтĕм ĕçсене тĕрĕс организацилени колхоз производствинче тĕп вырăн йышăнса тăрать. С. К. Коротков шултра хуçалăхăн ĕçĕсене пĕлсе йĕркелекен талантлă организатор шутланать, вăл малта пыракан нумай отраçлĕллĕ колхоз хуçалăхне йĕркелес тĕлĕшпе партипе правительство директивĕсене тĕрĕс пурнăçласа пырать. Çавăнпа та Вăрнар районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан орденлă колхозăн,—Совет Союзĕнчи паллă ялхуçалăх артелĕн,—нумай çул хушши ĕçлекен председателĕн ĕçри опычĕсемпе паллашни пуриншĕн те паха пулса тăрать.

Асăннă колхозăн ĕçри чаплă çитĕнĕвĕсем ялхуçалăх артелĕн Сталинла Уставне пурнăçа тĕрĕс кĕртсе пынипе пулнă. Колхоз пурнăçĕн çак законне çирĕп пăхăнса пырса, С. К. Коротков хăйĕн тăван колхозне аслă çул çине кăларчĕ, унăн колхозĕ малта пыракан шултра хуçалăх пулса тăчĕ, колхозниксем культурăллă та пуян пурăнакан пулчĕç. Кольцовкăна пыракан кашни çыннах халĕ ял çĕнелсе социализмла ял пулса тăнине хăй куçĕпе хăй курать. Сталин ячĕпе тăракан колхозăн культурăллă пурнăç строительствин опычĕсем çинчен хамăрăн орденлă Чăваш республикинчи колхозсене кăна мар, республика тулашĕнчи колхозсене те пĕлтермелле.

С. К. Коротков кулленхи ĕçре колхоз демократине çирĕп пăхăнса пырать. Кунта колхозра пур паха ĕçсене туса иртересси çинчен те малтан колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче тĕплĕн сӳтсе-яваççĕ, тума палăртнă ĕçсене çирĕплетнĕ хыççăн, тĕрĕс пурнăçласа пыраççĕ.

Артелĕн хуçалăх пурăнăçне пĕтĕмĕшпех план тăрăх туса пыраççĕ. Колхоз хăйĕн пилĕкçуллăх планне туса хатĕрленĕ, ăна вăл ăнăçлăн пурăнăçа кĕртсе пырать.

Колхозра сдельщинăпа ĕçлес йĕркене анлăн сарнă. Пур ĕçсемшĕн те çирĕп нормăсем тăрăх тӳлеççĕ, çакă колхозри пур ĕçсене те вăхăтра тата планран irttерсе тума май парать. Кунта кам лайăх та нумайтарах ĕçлет, çав хăйĕн ĕçĕшĕн продуктсем те ытларах илет, текен правилăна çирĕп пурăнăçлаççĕ. Бригадăсене, звеносене, строительствăри специалистсен, электрикеен, радистсен ĕçĕсене тĕрĕс организацилени пур ĕçсене те квалификациллĕ кадрсен вăйĕпе тума май парать. Çакă вăл, паллах ĕнтĕ, пысăк çитĕнӳ пулса тăрать, вăл нумай енлĕ колхоз хуçалăхĕнчи пур ĕçсене те ăнăçлă туса пыма пулăшать.

Сталин ячĕпе тăракан колхозăн председателĕ С. К. Коротков социализмлă ăмăрту пĕлтерĕшне пысăка хурса хаклать. Совет стройне малалла яма пулăшакан çак калама çук пысăк вăйпа кунта артелĕн пур ĕçĕсенче те анлăн усă кураççĕ, вăл вăй артелĕн пурăнăçĕпе ĕçĕсене анлăлатса пыма май туса парать. Социализмлă ăмăртăва пула, Кольцовкăри нумай колхозниксем ĕç нормисене irttерсе тултараççĕ, вĕсем хушшинче ĕçкунĕсен минимумне тултарман пĕр колхозник та çук.

Коротков юлташ коммунистсен парти членĕ. Вăл пĕтĕм ĕçсене Партипе Правительство решенийĕсем хушнă пек туса пырать, яланах колхозри партипе комсомол организацийĕсем çине таянса ĕçлет. Колхозра массăллă-политикăллă ĕçе анлăн сарса янă. Колхозниксем кунта пĕтĕм çĕршывăн тата хăйсен колхозĕн политикăпа хуçалăх ĕçĕсене аван пĕлсе тăраççĕ. Воспитани ĕçне çапла туни колхозри массăсен ăнланăвне çӳллĕ пусăма хăпартать, вĕсене пысăк ĕçсем тумашкăн организацилет. Отечественнăй аслă вăрçăн йывăр çулĕсенче тата мирлĕ строительствăн тапхăрĕнче те Кольцовкăри орденлă колхоз государствăна тырăпа ялхуçалăх продуктисем нумай пачĕ.

Ахальтен мар ĕнтĕ Совет Союзĕн Правительстви Отечественнăй Аслă вăрçă вăхăтĕнче колхоза икĕ хутчен куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялав пачĕ, колхозри пилĕк çынна Социализмлă Ĕç Геройĕн ятне пачĕ, нумай колхозниксемпе колхозницăсене орденсемпе тата медальсемпĕ наградăларĕ. Пысăк тухăçлă тырпул туса илес ĕçре пы-

сăк çитĕнӳсем тунăшăн Совет Союзĕн Верховнăй Совет Президиумĕ 1940-мĕш çулта колхоза Ленин орденĕпе наградăларĕ. Пĕтĕм Союзри Ялхуçалăх выставки ĕçленĕ вăхăтра колхоз яланах унта хăйĕн экспоначĕсене кăтартнă, ăна пĕрремĕш степень дипломĕ панă, С. К. Короткова хăйне Пысăк ылттăн медальпе наградăланă.

Пĕр иккĕленмесĕрех çапла калас пулать: С. К. Коротков ертсе пыракан Сталин ячĕпе тăракан колхоз, ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февральти пленумĕ йышăннă решенисене пурăнăçласа пырса, татах пысăк çитĕнӳсем тăвĕ. Колхозăн малалли çутă пурăнăçне колхозниксем хăйсен колхозĕн пилĕкçуллăх планĕн анлă цифрисем тăрăхах аван курса тăраççĕ. Колхоз умĕнче халĕ артель хуçалăх строительствинче тунă çитĕнӳсем çинче кăна чарăнса тăрас мар, пĕр чарăнмасăрах татах та малалла каяс задача тăрать.

Шансах тăма пулать: колхозра хуçалăх ĕçĕсене ăнăçлă туса пынипе пĕрлех колхозниксем культура шайне те хăпартсах пырĕç.

Парти, Правительство ертсе пынипе тата Чăваш Обкомĕпе Правительство тăтăшах пулăшса тănипе колхоз хăйĕн ĕçĕнче тата та пысăк çитĕнӳсем тăвĕ, вăл аслă Сталин генийĕ тунă ялхуçалăх артелĕн строительстви ĕçĕнче пĕтĕм Совет Союзĕнче пример кăтартса парĕ.

Профессор **Л. А. ПЕЛЬЦИХ**.

1.

Колхоз пуçланичченхи çулсенче пирĕн ялта пĕр десятинран 30—35 пăт тырă тухнине пысăк тухăçлă тырпул тесе шутланă. Темиçе вуншар çулсем хушшинче те ялти хресченсенчен хăшĕ-пĕрисем кăна пĕр десятинран çакăнтан кăтартнинчен 5—10 пăт ытларах тырă туса илме пултарнă, анчах ун пек хресченсем ялта пĕрерĕн кăна шутланнă.

Ялти çынсенчен нумайăшĕсен хăйсен тырпулĕ аран-аран «раштавччен» çеç çиме çитнĕ. Вĕсем те таса çăкăр мар, çăнăх çине арпа, йĕкел, măян хутăштарса пĕçернĕ çăкăр çинĕ. Чăваш республикинчи государство архивĕнче Кушлавăш ялĕнчи священник Александр Ломоносов Етĕрне уездĕнчи Земство Управине янă çырăвĕ упранса юлнă. Çак çырăва вăл 1912-мĕш çулхи январĕн 6-мĕшĕнче çырнă пулнă. Унта кăтартса панă тăрăх, Кольцовка ялĕнче вăл вăхăтра пулнă 160 хуçалăхран 16 хуçалăхĕн кăна хăйсене çиме тырри çитнĕ, ытти хуçалăхсем пурте «выçăллă-тутăллă хĕн курса пурăннă».

Выçлăхпа нушалăха пула, пирĕн хресченсен, хăйсем тахçантанпах пурăнакан тăван ялне пăрахса, тырпул пулакан инçетри кĕпĕрнесене тухса каймалла пулнă. Пĕр татăк çăкăр шыраса, вĕсем Атăлăн анатри тăрăхне, Кубане, Дон шывĕ хĕррине батрак пулса ĕçлеме кайнă. Ялти хресченсенчен нумайăшĕсем хăйсен çемйисемпе яланлăхах пурăнма Çĕпĕре куçса кайнă.

Нушаллă пурăнăçа тата ылханлă харпăрлă хуçалăха пула, Кольцовка хресченĕсем ĕмĕрне те пысăк тухăçлă тырпул туса илесси çинчен шутлама та пултарайман.

— Пирĕн çĕр çинче тухăçлă тырпул туса илеймĕн! — шантарсах каланă вĕсем.



*Сталин ячĕпе тăракан колхоз председателĕ Социализмлă Ĕç Геройĕ*
*С. К. КОРОТКОВ*

Тырпул сахал туса илнĕ начар çĕрсем çинче 1929-мĕш çулта пирĕн ялта Сталин ячĕпе тăракан колхоз организациленчĕ. Колхозла пурăнăçăн малтанхи çулĕсемех ялхуçалăхне аталантарас тĕлĕшпе анлă мелсем пуррине, «совет влаçĕ вăхăтĕнче пурне те тума пултаракан çынсен аллинче этемлĕх ырлăхĕшĕн пулма пултарайман çĕр çуккине кăтартса пачĕç» (С. М. Киров).

Колхоз çулĕ çăмăлах пулмарĕ. Çак çулсенче нумай йывăрлăхсене çĕнтермелле пулчĕ. Тӳрех калас пулать, пирĕн колхоз йывăрлăхсемпе кĕрешсе пынипе ӳссе çирĕпленчĕ. Эпир яланах большевиксен партийĕпе Сталин юлташ кăтартса панă çулпа çирĕп пытăмăр. 1934-мĕш çулта пирĕн колхоз кашни гектартан 14,5 центнершар тĕштырă туса илчĕ. Çакăн пек вăйлă тырпула пирĕн Кольцовка хăйĕн ĕмĕрĕнче те нихăçан туса курман. Çакна кура колхозниксем тата та тăрăшса ĕçлеме тытăнчĕç, вĕсем кĕл тата кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса çĕре лайăхрах çемçетме пуçларĕç. Колхозниксем тăрăшни ахалех пулмарĕ. Тепĕр çул тырпул тухăçлăхĕ татах та ытларах ӳсрĕ.

Государство пирĕн колхоза ĕмĕрлĕхех усă курма 1364 гектар çĕр уйăрса пачĕ. Пирĕн колхоза государство ытларах та ытларах пулăшу пама пуçларĕ. Пире вăл машинăсемпе минераллă удобренисем пама тытăнчĕ. Колхоз çĕрĕсене тракторсем сухалама пуçларĕç. Вăрнар МТС пулăшнипе, колхоз уй-хирĕсенчи мĕнпур ĕçсене: çĕртме, кĕрхи çĕртме тăвассине тата ытти çĕр ĕçĕсене тăвассине те пĕтĕмпех механизациленĕ.

Эпир çулсеренех агротехника ĕçĕсене аванлатса пытăмăр: çичĕ хирлĕ пусуçаврăнăш турăмăр, тĕрлĕ курăксем акма тытăнтăмăр; тырă калчисене апат пама тата çумкурăкĕсене çумлама пуçларăмăр. Çакăнпа пĕрлех çĕре сухаласа çемĕçтерес ĕçсене те нумай лайăхлатрăмăр. Агрономи наукипе паллашса тата коллективлă ĕçлесе пирĕн колхозниксем хамăрăн çĕре чылаях аванлатрĕç, çакна пула халиччен пысăк тухăçлă тырпул пама пултарайман начар çĕр çинчех эпир кашни гектартан 150-шар пăт е тата та ытларах тырпул туса илекен пултăмăр. Вăрçă пуçланичченхи пилĕк çул хушшинче эпир çулсеренех çакăн пек пысăк тухăçлă тырпул туса илтĕмĕр. Çакăншăн Совет правительстви 1940-мĕш çулта пирĕн колхоза Ленин орденĕпе наградăларĕ.

Пысăк тухăçлă тырпула вĕсем çăмăллăнах туса илеççĕ тенĕ хăшпĕрисем.



*Социализмлă Ĕç Геройĕ*
*А. Д. АШАНИН*

— Вĕсен мĕншĕн пысăк тухăçлă тырпул туса илес мар-ха, колхозăн çĕрĕ лайăх вĕт, çавăнпа тырпул та лайăх пулать, — тетчĕç вĕсем.

Çакă тĕрĕс марри çинчен эпир маларах та каларăмăр. Пирĕн колхоз çĕрĕсен картти пур. Çак картă çине пăхсан, пирĕн колхозăн акмалли çĕрĕсенчен 90 процентчĕ тăмлă тата кĕллĕ тăпра йышăннине такам та курать.

Çапла ĕнтĕ, эпир пысăк тухăçлă тырпул туса илни пирĕн çĕр лайăх пулнинчен мар, эпир хамăр тăрăшса ĕçленинчен, хамăрăн начар çĕре çемçетсе пынинчен, ăна пысăк тухăçлă тырпул памалла тунинчен килет. Пысăк тырпул пирĕн пата хăй тĕллĕн килмен, вăл пĕлĕт çинчен ăнсăртран татăлса анман. Мичурин: «Эпир çутçанталăк хамăра мĕн парасса кĕтме пултараймастпăр, пирĕн хамăрăн çутçанталăкран мĕн илме пултармаллине—илмелле», тесе кăтартса панисене ĕçре пурăнăçа кĕртсе пырса, пысăк тухăçлă тырпул туса илтĕмĕр, уншăн ырми-канми тăрăш-

са ĕçлерĕмĕр. Большевиксен партийĕ, совет влаçĕ, сталинла колхоз стройĕн темĕн тума та пултаракан аслă вăйĕ хресченсене ĕлĕкхи вăхăтри çĕр тарçисенчен çĕрĕн чăн-чăн хуçисем туса хучĕç. Эпир, çĕрĕн чăн-чăн тăрăшакан хуçисем пулса тăрса, хамăрăн сахал тухăçлă тырпул паракан начар çĕртен нумай тухăçлă тырпул паракан лайăх çĕр туса хутăмăр. Çак çĕр çинче халĕ ĕлĕкхи пек мăянпа армути мар, пысăк тухăçлă тырпул çитĕнтеретпĕр.

## 2.

Аслă Отечественнăй вăрçă вăхăчĕ пирĕн колхозшăн питех те йывăр вăхăт пулчĕ. Анчах та колхоз ăна чăтăмлăн тӳссе ирттерчĕ, çак вăхăт колхозшăн пысăк тĕрĕслӳ экзаменĕ пулса тăчĕ. Пирĕн колхозниксем хăйсем мĕн пама пултарнине пурне те: хăйсен обществăллă пуянлăхне те, хăйсен нихçан иксĕлми вăй-хăватне те Тăван çĕршывшăн пачĕç. Артельрен икĕ çĕр çын ытларах чи лайăх членсем фронта тухса кайрĕç. Колхозра ĕçлеме пултараканнисенчен çурри ытларах кăна юлчĕç. Вĕсем умне: государствăна тырпулпа апат-çимĕç продукчĕсем вăрçăченхинчен ытларах парас ответлă задача тухса тăчĕ.

Государствăна пирĕн тырпул парасси çулсерен ӳссе пычĕ. Вăрçă вĕçлеме май туса паракан татăклă çулта—1944-мĕш çулта—1940-мĕш çултипе танлаштарсан, государствăна эпир 6.000 пăт ытларах тырă патăмăр. Вăрçă çулĕсенче колхоз государствăна 75 пин пăт тырă, темĕн чухлĕ çĕрулми, пахчаçимĕçсем, аш-какай, çу, çăмарта тата ытти продуктсем нумай пачĕ. Пирĕн колхозниксем икĕ миллион тенкĕ ытла Тăван çĕршыв оборони фондне укçан хыврĕç.

Вăрçă вăхăчĕ, пĕтĕм çĕршыври ялхуçалăхне йывăрлăх умне тăратнă пекех, пирĕн колхоза та йывăрлăх умне пырса тăратрĕ. Вăрçă çулĕсенче колхоз тĕрлĕ курăк вăррисене вăрлăхлăх çителĕклĕ таран туса хатĕрлеймерĕ. Çакна пула çичĕ хирлĕ пусуçаврăнăш системи пăсăлчĕ. Тĕрĕссипе каласан, çичĕ хирлĕ пусуçаврăнăш вырăнне виçĕ хирлĕ пусуçаврăнăш пулса тăчĕ. Вăрçăччен туса пынă агротехника кăтартăвĕсем пурăнăçа кĕрсе пырайми пулчĕç.

Пурăнăç малашне хуçалăха кун пек йĕркепе тытса пыма май çуккине кăтартса пачĕ. Вăрçă пĕтнĕ хыççăн



*Колхоз бригадирӗ Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ В. Д. АШАНИН.*

эпир хамӑр колхозӑн вӑй-хӑватне хисеплесе пӑхрӑмӑр та, ҫав вӑй-хӑват малашне колхоза хӑвӑрттӑн аталантарса яма май парассине куртӑмӑр.

Вӑрҫӑ ҫулӗсенче эпир производство планӗсене пӗр ҫуллӑха кӑна тӑваттӑмӑр. Вӑрҫӑ пӗтнӗ хыҫҫӑн колхоз хуҫалӑхне аталантарас тӗлӗшпе темиҫе ҫуллӑх малалла производство планӗ тума май пулчӗ. 1945-мӗш ҫулти кӗркунне эпир хамӑр колхозӑн пӗрремӗш пилӗкҫуллӑх планне турӑмӑр. Ҫак планра хамӑр умма колхоз хуҫалӑхне епле пулсан та хӑвӑртрах вӑрҫӑччен хи шая ҫитерес, малалла ӑна тата ытларах аталантарса пырас задача лартрӑмӑр.

Пирӗн колхозӑн пилӗкҫуллӑх планне ВКП(б) обкомӗн бюровӗнче пӑхса тухнӑ, колхоза татӑклӑ кӑтартусем панӑ.

Колхоза усӑ курма уйӑрса панӑ ҫӗр колхоз пуянлӑхӗн тӗп ҫӑлкуҫӗ пулать. Ҫавӑнпа та эпир ҫак ҫӗрпе яланах тӗрӗс усӑ курма тӑрӑшнӑ. Ҫакна шута илсе, хамӑр колхозӑн пилӗкҫуллӑх планӗнче эпир, чи малтан, хире курӑк акса, колхозӑн пӗтӗм ҫӗрӗпе тӗрӗс усӑ курмашкӑн па-

лăртрăмăр. Колхоз, çитес çулсенчех нумай çул ӳсекен курăксем акса, вунă хирлĕ пусуçаврăнăшĕ çине куçать. Çакăнпа пĕрлех колхозăн пилĕкçуллăх планĕнче вырăнти органикăлла тата минераллă удобренисемпе анлăрах та тĕрĕс усă курас, сортлă вăрлăхсем акас, çĕре тарăнрах сухалас, агрономи наукин малта пыракан кăтартăвĕсемпе усă курас задачăсем лартнă.

Пирĕншĕн çичĕ хирлĕ пусуçаврăнăшĕ çителĕклĕ пулмарĕ. Эпир планпа вунă хирлĕ пусуçаврăнăшĕ йышăнса çирĕплетрĕмĕр. Çак пусуçаврăнăшĕнче тĕрлĕ культурăсем çакăнта кăтартнă пек улшăнса пыраççĕ: пĕрремĕш хир—çĕртме, иккĕмĕш—кĕрхи тырăсем тата клевер акнă, виççĕмĕш—пĕрремĕш çул ӳсекен курăксем, тăваттăмĕш—иккĕмĕш çул ӳсекен курăксем, пиллĕкмĕш —çурхи тулă, улттăмĕш—пропашнăй тата пăрçа йышши культурăсем, çиччĕмĕш—çурхи тĕштырăсем, саккăрмĕш—çĕртме, тăххăрмĕш—кĕрхи тырăсем, вуннăмĕш—çурхи тĕштырăсем.

Вунă хирлĕ пусуçаврăнăшĕ пире хамăр умма лартнă задачăсене пурнăçлама май парать, вăл çурхи тулă акакан çĕр лаптăкне ӳстерме пулăшать, тĕштырăсем акмалли çĕр участокне пĕчĕклетмесĕрех колхозри выльăх-чĕрлĕхсем валли кирлĕ апат-çимĕç базине ӳстерсе лайăхлатать, юлашкинчен, çак пусуçаврăнăшĕ тĕрлĕ курăксем акнипе тăпрана вĕтĕрех структурăллă тăвать.

Çĕрĕç культурине хăпартассисĕр пуçне артель хуçалăхĕн пилĕкçуллăх планĕнче эпир хамăр умма çакăн пек задачăсем лартрăмăр:

колхозри выльăх-чĕрлĕхсемпе колхозниксен выльăх-чĕрлĕхсем валли кирлĕ апатăн çирĕп базине тумалла;

пĕрлештернĕ пур выльăх-чĕрлĕхсемпе кайăк-кĕшĕксен хисепне ӳстерсе, вĕсен тухăçлăхне чылаях хăпартмалла;

пĕрлештернĕ хуçалăха пур енчен те вăйлатса пырса, колхозăн государствăна памалли тата кооперацие сутуилӳ организацийĕсене сутмалли таварлă продукци хисепне ӳстермелле;

колхозниксене ĕçленĕшĕн укçа, тырпул, пахчаçимĕçĕсем тата ытти продуктсем ытларах пама тăрăшмалла;

колхозлă яла тĕпренех урăхлатса çĕнетмелле, ăна пур енчен те илемлĕ тумалла, колхозниксен культура шайне хăпартмалла.

Хамăрăн çитĕнӳсем пирки каланă май пирĕн чи малтан колхозăн пилĕкçуллăх планĕ çинче чарăнса тăрас пулать, мĕншĕн тесен колхоза организацие хуçалăх ен-



*Колхоз звеньевойӗ Социализмлӑ Ӗҫ Геройӗ Т. Ф. Елдырева.*

чен ҫирӗплетес тӗлӗшпе вӑл план тӗп вырӑн йышӑнса тӑрать.

Колхоз—социализмла шултра хуҫалӑх. «Социализмла шултра хуҫалӑха,—тесе вӗрентет Сталин юлташ,—плансӑр тытса пыма май ҫук. Ҫӗрҫӗнче ҫӗр хуҫалӑха, хӑшпӗр чухне пин хуҫалӑха та ытла пӗрлештерсе тӑракан шултра хуҫалӑха планпа кӑна ертсе пыма пулать. Плансӑр вӑл пӗтсе ларма, саланса кайма пултарать».

Чӑнах та, ӗҫре план кирлӗ. Харпӑрлӑ хресчен хуҫалӑхӗ условийӗнче те, мӗн те пулин туянас пулсан, хресченӗн чи малтан ҫав япалана туянма мӗн кирлине, ӑна туянма пултарассипе пултарайманнине, ҫав япалана туянни ӑна мӗнле усӑ панине тата ыт. те шута илес пулать. Анчах харпӑрлӑ вак хресчен хуҫалӑхӗпе колхозлӑ шултра хуҫалӑх хушшинче питӗ пысӑк уйрӑмлӑх пур. Колхоз хуҫалӑхӗн планӗ икӗ тӗп ыйтӑва—малашне мӗнле ҫитӗнӳсем тӑвас, ӑна пурӑнӑҫлас тӗлӗшпе мӗнле мерӑсем

йышăнас ыйтусене—татса памалла. Çавăнпа та колхоз планĕ калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать.

Тӳрех çакна калас пулать. Колхозăн пилĕкçуллăх планĕ пулман пулсан, вăрçă хыççăнхи çулсенче тунă çитĕнӳсене те тăвайман пулăттăмăр. Пилĕкçуллăх план колхозниксене малашне мĕн тумаллисене, вĕсене пурăнăçлас тĕлĕшпе епле ĕçлемеллине уççăн кăтартса пачĕ. Çак плана пула, колхозниксемпе колхозницăсем колхозăн ыранхи кун-çулне, вăл мĕнле пулассине цифрăсемпе фактсем тăрăх уççăн курса тăчĕç. Колхоза аталантарас тĕлĕшпе пилĕкçуллăх планра тума палăртнă задачăсем пире тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлеме хавхалантарчĕç, малашне те хавхалантарса пыраççĕ.

Плансăр ĕçлени вăл малашне мĕн тăвассине пĕлмесĕр, тĕлсĕр-палсăр ĕçлени пулать. Паллах, плансăр ĕçлени вăл ĕçре нимĕнле результат та памасть.

Анчах, пилĕкçуллăх план пире хăй тĕллĕнех ĕçре çитĕнӳсем тума май пачĕ тесе шутлани вуçех тĕрĕс мар пулать. Çак плана пурăнăçа ăнăçлăн кĕртсе пырас тĕлĕшпе парти организацийĕпе колхоз правленийĕн питех пысăк организациллĕ ĕçсем туса ирттермелле пулчĕ. Пур ĕçсенче те ялхуçалăх артелĕн Сталинла Уставне пурăнăçа кĕртсе пырса, ăна нихăш енчен те пăсма памарăмăр; эпир колхозăн обществăллă харпăрлăхне сыхласа çирĕплетес майпа тĕрлĕ ĕçсем туса ирттерме палăртрăмăр. Эпир хальхи вăхăта тивĕçлĕ ĕç нормисем, ĕçшĕн мĕн чухлĕ тӳлемелли хаксем çĕнĕрен туса хатĕрлерĕмĕр, колхозри управленипе администраци аппаратĕнче ĕçлекенсене ĕçшĕн тӳлемеллине йĕркелерĕмĕр. Колхозниксен ĕçĕсене харпăрлă тата пĕчĕк ушкăнлă сдельщина никĕсĕ çинче тĕрĕс организацилерĕмĕр. Çаксем çинчен тĕплĕреххĕн малалла каласа парăпăр.

## 3

Хамăр колхозăн пилĕкçуллăх планĕ тăрăх малтанхи çулĕнче тума палăртнă ĕçсене пирĕн йывăр условисенче пурăнăçламалла пулчĕ. Çумăр пулманнипе 1946-мĕш çул ялхуçалăхĕшĕн начар çул пулчĕ. Çак çул пуçланнă чухне пирĕн тырпул резервĕ нимĕн чухлĕ те пулман. Çитменнине, çак çул çуркунне 300 гектара яхăн ыраш калчи инкек пулнă пирки пĕтрĕ. Çапах та, йывăрлăхсемпе пĕр чарăнмасăр çине тăрса кĕрешсе пынипе тата пилĕкçуллăх



*Колхоз звеньевойĕ Социализмлă Ĕç Геройĕ Е. Е. ЕРОШИНА.*

планра палăртнă агротехника кăтартăвĕсене пĕтĕмĕшпех пурăнăçа кĕртсе пынипе, эпир сахалах мар çитĕнӳсем турăмăр. Çак çул, çанталăк 1921-мĕш çулхи çанталăкран та ытларах типĕ тăнипе, тырпул тухăçлăхĕ планра палăртнинчен чылай чакрĕ, анчах эпир çапах та лайăх тырпул пухса илтĕмĕр. Вăл çул эпир, вăтам шутпа хисеплесен, тыră акмалли лаптăкран гектартан 12 центнер тыră пухса кĕтĕмĕр. Çуртыррисем, вăтамран илсен, кашни гектартан 16-шар центнер, уйрăм участоксем çинче тулăпа сĕлĕ кашни гектартан 20—29 центнер таран тухрĕç. Çав çул эпир пĕтĕмĕшпе 8.237 центнер тыră пухса илтĕмĕр. Çумăр пулнă 1945-мĕш çултипе танлаштарсан, çав çул эпир, çумăр пулман пулин те, 600 центнер ытларах тыră туса илтĕмĕр. Эпир государствăна тыră срокчен малтан парса татрăмăр, государствăна планран иртерсе тыră нумай патăмăр, çав вăхăтрах колхозниксене те ĕçкунĕ пуçне икшер килограмм тыră валеçрĕмĕр.

1946-мĕш çулта эпир пысăк тухăçлă тырпул туса илме çирĕп никĕс хывса хăвартăмăр. Çĕртме тумалли хире пурĕ 26 пин лав тислĕк тăкрăмăр, çĕртмене лайăх сухаларăмăр. Кĕрхи тырăсене лайăх сортлă вăрлăхпа агротехникăн чи лайăх срокĕсенче акса хăвартăмăр. Çак çулах эпир «Казанская 5+6» сорт элитлă ыраш акрăмăр. Кĕрхи çĕртме сухине те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа турăмăр, хире 4.000 центнер минералла удобрени кăларса çемçетрĕмĕр, вунă хирлĕ пусуçаврăнăшĕ çине куçас тĕлĕшпе нумай ĕçсем турăмăр.

1946-мĕш çулта эпир кураксем акассине пуçарса ятăмăр. Вунă хирлĕ пусуçаврăнăшĕнче кăтартнă çĕр лаптăкĕ çине планпа палăртнă чухлех тĕрлĕ куракçем акса хăвартăмăр. Çакăн хыççăн акнă куракçен çĕр лаптăкĕн хисепĕ колхозра 270 гектара çити ӳсрĕ, вăрçăччен хипе танлаштарсан, акнă куракçен çĕр лаптăкĕ 70 гектар таран ӳсрĕ.

Çак çул эпир выльăх-чĕрлĕхсен хисепне ӳстерес тĕлĕшпе пилĕкçуллăх планăн контрольнăй цифрăсене те пĕтĕмĕшпех тултартăмăр. Государствăна обязательство тăрăх сĕт, какай, çăм, выльăх-чĕрлĕхĕн ытти продукчĕсене срокран малтан планран иртттерсе парса татрăмăр.



*Колхоз клубĕ.*

Колхозăн обществăллă хуçалăхне аталантарас, уйрăмăнах ăна механизацилес тĕлĕшпе пилĕкçуллăх планăн малтанхи çулĕнче пысăк ĕçсем тунă. Пĕр çул хушшинче эпир хăма çуракан икĕ рама, тăватă грузовой машина,

пĕр легковой автомобиль, МК-1100 сложнăй молотилка, тырă вырмалли сакăр машина, тырă акмалли сакăр машина, тырă сортламалли сакăр машина, виçĕ электромотор, 30 пуç мăйракаллă шултăра выльăх ăратлисене, тата ытти япаласем те нумай туянтăмăр. Çакăнпа пĕрлех колхозăн укçа тупăшне те нумай ÿстертĕмĕр, çав çул колхозниксене ĕçкунĕ пуçне 2-шер тенкĕ валеçсе патăмăр.

Ялхуçалăх артель Уставĕн 6-мĕш параграфĕнче правлени тата колхозăн пур членĕсем те çаксене тума пулаççĕ тесе çырса хунă: «Артель членĕсен культурлă шайне ÿстерсе пымалла, вĕсене хаçатсем, кĕнекесем вулама ытларах хăнăхтармалла, радио, кино ĕçне сармалла, клубсем, библиотекăсем тата вуламалли çуртсем тумалла, мунчасем, парикмахерскисем тумалла, уйра çутă та таса стансем тумалла, ял урамĕсене йĕркене кĕртмелле, урамсене тĕрлĕ йывăççем, пуринчен ытла çимĕç йывăççисем лартса тухмалла, колхозниксене хăйсен килçурчĕсене лайăхлатас тата илемлетес ĕçре пулăшу памалла». Çавăнпа та эпир пилĕкçуллăх плана тунă чухне яла илемлетсе ăна культурăллăрах тăвасси çине ытларах çаврăнса пăхрăмăр.

Çак тĕлĕшпе эпир 1946-мĕш çултах пысăк ĕçсем туса ирттертĕмĕр: колхозниксем валли çĕнĕрен 7 çурт лартрăмăр; 850 метр тăршшĕ 59 хапха турăмăр, вĕсен юписемпе хăмисене тĕрлĕ фигурăсем касса илемлетнĕ; 3.000 метр тăршшĕ икĕ ĕрет тăратса çапса хăма карта тытрăмăр, çĕнĕрен виçĕ кĕпер туса виçĕ пĕве пĕвелерĕмĕр; бригадăсем валли тăватă мунча пури пураласа лартрăмăр; парк тата икĕ сквер турăмăр; яла симĕслетсе илемлетме 5 пин тĕп ытла тĕрлĕ йывăç тĕмĕсем лартрăмăр, электростанципе радиоузела тата сасла кинона çĕнĕрен ĕçлеттерме тытăнтăмăр; хамăрăн пичетленсе тухакан многотиражка хаçата кăларма пуçларăмăр.

Тĕпрен илсен, пилĕкçуллăх планăн малтанхи çулĕнче тунă ĕçсем çаксем пулаççĕ.

1947-мĕш çулхи февраль уйăхĕнче ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн Пленумĕн трибуни çинчен пĕтĕм çĕршыва ялхуçалăхне вăрçă хыççăн аталантарса хăпартма большевикла хĕрÿллĕн чĕнсе каланă сăмахсем илтĕнсе кайрĕç. А. А. Андреев юлташ доклачĕ тăрăх йышăннă хăйĕн историллĕ постановленийĕнче ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февраль уйăхĕнчи Пленумĕ çитес вăхăтра тумалли çак задачăсене лартрĕ: «Ялхуçалăхне вăйлатса ярас за-



ЧУВАШСКАЯ КНИЖНАЯ ПАЛАТА г. Чебоксары

дача, ăна хамăрăн халăх валли питĕ нумай апат-çимĕç, çăмăл промышленность валли питĕ нумай чĕртавар хатĕрлесе пама, государство валли кирлĕ чухлĕ апат-çимĕçпе чĕртавар резервĕсем пухса хатĕрлеме çителĕклĕ таран вăйлатса ярас задача тухса тăчĕ».

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февраль уйăхĕнчи Пленумĕ çак задачăна пурăнăçламалли конкретлă майсене кăтартса пачĕ. «Ялхуçалăхне вăрçă хыççăнхи вăхăтра вăйлатмалли мерăсем çинчен» пленум йышăннă постановленине колхоза пĕрлешнĕ хресченсем колхозсен мĕнпур ĕçĕсен боевой программи вырăнне йышăнчĕç. Пирĕн Кольцовкăри Сталин ячĕпе тăракан колхозри колхозниксем те вăл постановленине малашнехи ĕçсен программи вырăннех йышăнчĕç.

СССР Верховнăй Совет Президиумĕ 1947-мĕш çулхи мартăн 29-мĕшĕнче «Пысăк тухăçлă тулă, ыраш, кукуруз, сахăр кăшманĕ тата çĕрмамăк туса илнĕшĕн колхозниксене, МТС-семпе совхозсен работникĕсене Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне парасси çинчен тата орденсемпе медальсем парса наградăласси çинчен» кăларнă Указ колхоза пĕрлешнĕ хресченсене пысăк тухăçлă тырпулшăн кĕрешме анлă майсем туса пачĕ.

Çак историллĕ документсемпе хавхаланса, пирĕн колхозри колхозниксемпе колхозницăсем, Октябрьти Социализмлă Аслă революци 30 çул тултарнă ятпа пынă пĕтĕм Союзри социализмлă ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине пур культурăсен тухăçне те хăпартма, 1947-мĕш çулта 200 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 160-шар пăт ыраш, 50 гектар çĕр лаптăкĕнчен кашни гектартан 160-шар пăт çурхи тулă туса илме обязательство пачĕç.

Парти организацийĕ ертсе пынипе пирĕн колхозниксем хăйсем çине илнĕ обязательствăсене чыслăн пурăнăçларĕç. Иртнĕ çулта пăр çапнипе кĕрхи тырăсем кашни тăваткăл метр çинче 180—200 туна таран, 29 гектар çинчи пăрçа пĕтĕмĕшпех пĕтнĕ пулин те, эпир уйрăм культурăсем тăрăх çакăн чухлĕ тырпул туса илтĕмĕр: 299 гектар çĕр лаптăкĕ çинчен кашни гектартан 25,3 центнершер ыраш, вăл шутран, 200 гектар çинчен кашни гектартан 186-шар пăт ыраш, 70 гектар çĕр лаптăкĕ çинчен кашни гектартан 32,5 центнершер çурхи тулă, кашни гектар пуçне урпа 22,8 центнер, сĕлĕ—27,7 центнер, пăрçа—31,9 центнер туса илтĕмĕр. Тĕштырăсемпе пăрçа йышши культурăсем тăрăх эпир вăтам хисеппе кашни гектартан 27,1 центнершер

пухса илтĕмĕр. Колхозăн пилĕкçуллăх планĕнче кăтартнă тăрăх, 1947-мĕш çулта пирĕн кашни гектартан вăтам шутпа 24,8 центнершер тĕштырă туса илмелле пулнă пулсан, эпир çакна ӳстерсе тултартăмăр, кашни гектартан 2,3 центнершер ытларах тĕштырă туса илтĕмĕр. Тырпул тухăçлăхне ӳстересси тăрăх государство планне икĕ хут ытларах ӳстерсе тултартăмăр: государство планĕ тăрăх, вăтам шутпа, кашни гектартан 13,5 центнершер тĕштырă туса илес вырăнне эпир кашни гектартан 27,1 центнершер тырă туса илтĕмĕр. Çапла ĕнтĕ пирĕн колхоз вăрçă пĕтнĕ хыççăнхи пилĕкçуллăх планăн иккĕмĕш çулĕнчех пысăк тухăçлă тырпул туса илекен пулчĕ, çак тĕлĕшпе вăл çав çулах вăрçă умĕнхи шайран иртсе кайрĕ.

1947-мĕш çулта колхозра пухса илнĕ мĕнпур тырă хисепĕ, ытти колхозсене сортлă вăрлăх элита парса процент илнĕ тырăпа пĕрле шутласан, пурĕ 16 пин центнер пулчĕ, 1946-мĕш çултипе танлаштарсан, пирĕн колхозăн тырпул хисепĕ 7.863 центнер ытларах ӳсрĕ. Тăван çĕршывăмăр умĕнче хамăрăн пĕрремĕш заповеде пурăнăçласа, пирĕн колхоз августăн 23-мĕшĕ тĕлне (хамăр çине илнĕ обязательствăран икĕ уйăх маларах) государствăна 24.000 пăт ытларах тырă пачĕ. Государствăна çĕрулми, пахчаçимĕçсем, выльăх-чĕрлĕх продукчĕсем памалли обязательствăсене те эпир срокчен малтан ирттерсе тултартăмăр. Хамăр колхоза кирлĕ вăрлăхсене икĕ çул хушши акма çителĕклĕ хăварнă, ялхуçалăх артелĕн Уставĕнче кăтартса панă фондсене тунă тата колхоз пасарĕнче сутмашкăн 4.200 пăт уйăрса хунă хыççăн, эпир ĕçкунĕсем тăрăх 6.227 центнер тырă, урăхла каласан, кашни ĕçкунĕ пуçне вăтамран 6 килограма яхăн тырă валеçрĕмĕр. Колхозниксен пухăвĕ йышăннă йĕрке тăрăх, эпир тырра ĕçкунĕсем тăрăх лайăхрах ĕçлесе пысăк тухăçлă тырпул туса илекенсене ытларах шутласа, начартарах ĕçленипе сахалтарах тырпул туса илекенсене каярах шутласа валеççе патăмăр. Çак принцип тăрăх, пирĕн колхозра лайăх ĕçлесе пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ бригадăсемпе колхозниксем ĕçкунĕ пуçне çичшер килограмм, ыттисем кашни ĕçкунĕ пуçне 5,7 килограмм тырă илчĕç. Отечественнăй вăрçăра вилнĕ воинсен çемйисене ĕçкунĕсем тăрăх валеççе панисĕр пуçне, вĕсем миçе ĕçкунĕ тунине хисепе илсе, кашни хуçалăхах икĕ центнертан пуçласа сакăр центнер таран тырă хушса панă. Çак тырра эпир вăрçăра вилнĕ çынсен çемйисене пулăш-

ма тесе колхозăн пĕтĕм тыrринчен икĕ процент илсе тунă фондран патăмăр. Колхоз уй-хирĕнче уйрăмăнах тăрăшса ĕçленĕ уйрăм колхозницăсем пĕр ĕçкунĕ пуçне вуншар килограмм таран та тырă илнĕ. Колхозра кашни хуçалăха, вăтам шутпа хисеплесен, 206-шар пăт тырă валеçсе панă.

1947-мĕш çулта уй-хирте тăрăшса ĕçлени пире çакăн чухлĕ тупăш пачĕ.

Кунта çакна палăртас пулать: çĕнĕ сортлă тĕштырă культурисенчен эпир «Казанская 5+6» ырашпа «Торсдаг» пăрçана усăллăрах тесе шутлатпăр.

Хамăрăн ĕçри опытра тĕрĕслесе пăхнă тăрăх, «Торсдаг» пăрçа типĕ çанталăка та лайăх тӳссе irттерме пултарни палăрчĕ. Çак тĕлĕшпе вăл колхозра акакан пăрçан ытти сорчĕсенчен те иртсе каять. Çак пăрçан ӳссе пулса çитес тапхăрĕ те кĕске, вăл кĕрхи тырăсемпе пĕр танах пулса çитет. Унăн туни те кĕске ӳсет, çав хушăрах питĕ нумай хутаçлă пулать. Иртнĕ çулсенче эпир «Торсдаг» пăрçана кашни гектартан хĕрĕхшер центнер пухса илтĕмĕр.

Ĕçри опытра сăнанă хыççăн, эпир çакăн пек вывод турăмăр: кĕрхи çĕртме сухине 30—35 сантиметр тарăнăш сухаласа çуркунне культиваци тунă хыççăн, «Торсдаг» сортлă пăрçа аксан, вăл пигех те тухăçлă пулать. Пăрçа пуçтарса илнĕ хыççăн çĕре 10—12 сантиметр тарăнăш сухаласа кĕрхи тырăсем акмалла. Пирĕн опыт кăтартнă тăрăх, çав тырăсен тухăçлăхĕ чылаях ӳсме пултарать. 1950-мĕш çулта эпир ыраш акма çĕртме тунă пусса (пĕтĕмĕшпе мар пулсан та, 60—70 процентран кая мар) «Торсдаг» сортлă пăрçа акма шутлатпăр. Çапла тунипе эпир темиçе пиншер пăт ытларах тĕштырă туса илетпĕр, çакна эпир çирĕппĕн шанса тăратпăр.

Хальхи вăхăтра эпир çĕре 30—35 сантиметр тарăнăш сухалатпăр, малашнехи вăхăтсенче 50 сантиметр тарăнăш сухалас задача лартатпăр. Çакна пурăнăçа кĕртсен, пирĕншĕн нимĕнле тип çанталăк та хăрушă пулмасть. Ана пурăнăçласан, вара люцерна курăкĕ те тухăçлăрах ӳссе çитĕнекен пулать. Мĕншĕн тесен унăн тымарĕ 1,5 метр таран çĕр айнелле кайнипе люцерна паркарах çитĕнет. Çĕре тарăнран та тарăнрах сухаласси хальхи вăхăтра тарăн сухалама пултаракан плугсем çуккипе чарăнса тăрать. Çавăнпа та, ялхуçалăх машинĕсене конструкцилекенсен çак ыйтупа халех интересленес пулать.

1947-мĕш çулта эпир мĕнле ĕçленине тата Совет влаçĕпе колхоз стройĕ çулĕсенче пирĕн Кольцовка ялĕ мĕн тери малалла кайнине çак факт та аван кăтартса парать. Статистика кăтартăвĕсем тăрăх, 1913-мĕш çулта Кольцовка ялĕнче пуçса илнĕ мĕнпур тырпул хисепĕ пĕр хуçалăх пуçне (ку шута кулаксен хуçалăхĕсем те кĕреççĕ) 60 пăт тивнĕ. Çак шута çиме тата выльăхсене валли уйăрса хăварнă тырă, акма кирлĕ вăрлăх та кĕнĕ. Хальхи вăхăтра колхоза пĕрлешнĕ кашни хуçалăх пуçне вăтам шутпа 106 пăт тырă валеçĕнет.

Совет правительстви мана, бригадирсем пулса ĕçлекен Александрпа Василий Ашанинсене тата звеньевойсем пулса ĕçлекен Т. Елдыревăпа Е. Ерошинăна Социализмлă Ĕç Геройĕсен ятне парса, нумай колхозниксемпе колхозницăсене Совет Союзĕн орденĕсемпе медалĕсем парса наградăласа, пирĕн ĕçе пысăка хурса хакларĕ.

* * *

1947-мĕш çула—колхозăн пилĕкçуллăх планăн иккĕмĕш çулне—эпир уй-хир ĕçĕсем тăрăх çеç мар, колхоз хуçалăхĕн ытти мĕнпур отраслисем тăрăх та лайăх вĕçлерĕмĕр.

Выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе государство панă плана нумай ирттерсе тултартăмăр. 1947-мĕш çулхи январĕн 1-мĕшĕ тĕлне пирĕн 129 лаша, 141 пуç мăйракаллă шултра выльăх, 88 сысна, 163 сурăх, 81 пуç кайăк-кĕшĕк пулнă пулсан, 1948-мĕш çул умĕн пирĕн 138 лаша, 180 пуç мăйракаллă шултра выльăх, 132 сысна, 400 сурăх, 305 пуç кайăк-кĕшĕк пулнă. Колхозăн пилĕкçуллăх планĕ тăрăх эпир фермăри сăвакан ĕнесен хисепне 1950-мĕш çулта 100 пуçа çитерме палăртнă. 1948-мĕш çулхи январĕн пĕрремĕшĕ тĕлне пирĕн 85 пуç сăвакан ĕнепе 15 пуç пушмак пăрусем пулнă. Çапла ĕнтĕ, ĕнесен йышне ӳстерес тĕлĕшпе пилĕкçуллăх планра палăртнă хисепе эпир икĕ çулта тултартăмăр. Пирĕн колхозра выльăх-чĕрлĕхсен продуктивноçĕ те чылаях ӳсрĕ. 1947-мĕш çулта эпир кашни ĕнерен вăтам шутпа 1.200 литр сĕт суса, кашни сурăхран вăтам шутпа 2,6 килограмм çăм касса илтĕмĕр, кашни сысна ами вăтам шутпа 14 çăвăр çăварларĕ, вĕсене пурне те лайăх пăхса çитĕнтернĕ.

Колхозра выльăх-чĕрлĕхсене лайăх пăхакансем нумайланчĕç, вĕсем хăйсен ĕçне юратса ĕçлеççĕ. Тĕслĕх-



*Ял варринчи ҫӗнӗ урам*

шӗн, сысна ферминче ӗҫлекен Екатерина Трошкинах илме пулать. Иртнӗ ҫулта вӑл хӑйне ҫирӗплетсе панӑ кашни сысна ами пуҫне 18-шар ҫӑвӑр пӑхса ҫитӗнтерчӗ. Ӗне сӑвакан Клавдия Ситухина кӑҫал хӑйне ҫирӗплетсе панӑ вунӑ ӗнерен кашнинченех 3.000-шер литр сӗт суса илме обязательство пачӗ, вӑл ӑна чыслӑн пурӑнӑҫласа пырать. Выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекен ҫынсен ӗҫри квалификацине эпир зоотехникӑпа ветеринари вӗрентӗвӗ урлӑ ӳстерсе пыратпӑр, хӗллехи вӑхӑтра кашни фермӑрах зоотехникӑпа ветеринари ӗҫне вӗренес тӗлӗшпе кружоксем организацилетпӗр.

Пилӗкҫуллӑх планра яла илемлетес тӗлӗшпе палӑртнисене те пӗтӗмӗшпех пурӑнӑҫларӑмӑр. Эпир колхозниксен ҫурчӗсене ҫӗнӗрен лартатпӑр, урамсенче 6.000 метр яхӑн икӗ ӗретлӗ хӑма картасем тытрӑмӑр, сад турӑмӑр, урамсем тӑрӑх 16 пин тӗп тӗрлӗ йывӑҫсем лартрӑмӑр. Пирӗн ял сӑн-сӑпачӗ те тӗпренех ҫӗнелсе илемленчӗ.

Пилӗкҫуллӑх планра эпир 1947-мӗш ҫулта колхозра укҫа шучӗпе 990 пин тенкӗ тупӑш илме палӑртнӑччӗ, тӗрӗссипе илсен, колхоз ҫав ҫулах пӗр миллион тенкӗ ытла тупӑш илчӗ.

Пирӗн сортлӑ вӑрлӑхсем те пулман. Чи лайӑх сортлӑ вӑрлӑхсене эпир селекционнӑй станцирен илсе килтӗмӗр.

Хальхи вăхăтра пирĕн сортлă вăрлăхсем («Торсдаг» пăрçа, «Казанская 5+6» ыраш, «Ульяновка» тулă) хамăра кирлинчен те ытлашши шутланаççĕ. Ытлашши вăрлăха эпир Мари республикине, Кострома, Владимир, Иваново тата Россия Федерацийĕн ытти облаçĕсене те ярса тăратпăр.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февраль уйăхĕнчи Пленумĕ «Ялхуçалăхне вăрçă хыççăнхи вăхăтра вăйлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă историллĕ постановленинче пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем партипе правительство колхозлă ялсенчи ĕççыннисем пирки сталинла тăрăшнине курчĕç. Çакăнпа хавхаланса, вĕсем колхоз уй-хирĕсемпе фермисенче ырми-канми тăрăшса ĕçлерĕç. Колхозниксем епле тăрăшса ĕçленине вуншар примерсемпе кăтартса пама пулать. Колхоз пуçланнăранпа та пирĕн колхозниксем иртнĕ çулти пек тăрăшса ĕçлемен темелле. Колхоз уй-хирĕсенче çуркуннерен пуçласа кĕркуннечченех колхозниксем социализмла ăмăртса ĕçлерĕç. Пирĕн колхозра социализмлă ăмăртăва хутшăнман пĕр колхозник та пулмарĕ. Социализмлă ăмăртура коммунистсем малта пычĕç, вĕсем хăйсен ĕçĕпе мĕнпур колхозниксене пример парса ертсе пычĕç. Парти организацийĕ колхозниксене яланах халăхсен аслă çулпуçне Сталин юлташа панă сăмаха чыслăн пурăнăçласси çинчен, ăна пурăнăçлани чи пысăк тивĕç пулса тăни çинчен асăрхаттарса тăчĕ. Юратнă çулпуçăмăра Сталин юлташа панă сăмаха эпир чыслăн пурăнăçларăмăр.

## 4.

Пирĕн колхоз пысăк тухăçлă тырпула агротехника кăтартăвĕсене пурăнăçа кĕртсе пынипе, вĕсене колхозри ĕçсемпе тачă çыхăнтарса пынипе, ĕçе тĕрĕс организациленипе, бригадăсемпе звеносене яланах производствăллă заданисем парса пынипе туса илчĕ. Ĕçе план тăрăх туса пырасси, ăна организацилесси, агротехника кăтартăвĕсем пирĕн колхозра пĕр-пĕринпе яланах тачă çыхăнса тăраççĕ.

Эпир колхоз умне лартнă задачăсене татса пама май паракан тĕрĕс пусуçаврăнăш турăмăр, хире тĕрлĕ курăксем акатпăр, ирхи çĕртме тăватпăр, таса çĕртме сухине лайăх сухаласа çемĕçтеретпĕр, çĕре тарăн сухалатпăр,

пысăк кондициллĕ лайăх сортлă вăрлăхсем акатпăр, органикăлла тата минераллă удобренисемпе тĕрĕс усă куратпăр, тырпулсене яланах вăхăтра акатпăр, çĕре вăхăтра сухаласа çемĕçтеретпĕр, тырпулсене лайăх пăхса çитĕнтеретпĕр. Çакă ĕнтĕ, агротехника кăтартăвĕсене пурăнăçлани пулать.

1947-мĕш çулта çураки ĕçĕсене колхоз çичĕ кун хушшинче туса пĕтерчĕ. Кĕрхи тырăсене августăн 23-мĕшĕ тĕлне акса пĕтернĕ. Çак вăхăт тĕлнех эпир тырпулсене вырса пĕтертĕмĕр, пĕтĕм кĕлтесене капана хыврăмăр. Колхозри бригадăсемпе звеносем пурте планпа палăртнă агротехника кăтартăвĕсене пурăнăçа кĕртрĕç. Кĕрхи тырăсене мĕн пурĕ 299 гектар çине май уйăхĕнче çĕртме тунă çĕр çине, çурхи тырăсене сентябрь уйăхĕнче кĕрхи çĕртме тунă çĕр çине акса хăварнă. Акасса эпир сеялкăсемпе ĕретлĕн, сортлă тата лайăх шăтакан кондициллĕ таса вăрлăхпа акнă. Акас умĕн вăрлăхсене формалинпа çунă, уйрăм участоксем çине яровизациленĕ вăрлăхсем акнă. Колхозăн уй-хирĕсене тĕрлĕ удобренисемпе çителĕклĕ çемĕçтернĕ. Çĕртме сухи тумалли хирсене планпа палăртнă тăрăх 25.000 лав тислĕк тăкас вырăнне пурĕ 26.000 лав тислĕк тăкнă. Минераллă удобренисене планпа палăртнă 800 тонна вырăнне 400 тонна кăларнă. Çĕре эпир 25—28 сантиметр тарăнăш сухаланă, 12 сантиметр тарăнăш культиваци тунă. 280 гектар çинчи кĕрхи калчасене çуркунне сÿреленĕ. Тăпрара нÿрĕ ытларах тытса юлас тĕлĕшпе кĕрхи çĕртме тунă çĕрсене çуркунне тепĕр хут сÿреленĕ. Эпир уйрăмăнах кĕрхипе çурхи тырăсен калчисене апат парасси çине ытларах çавăрăнса пăхнă, çумкурăкĕсене яланах çумласа тăнă.

Тĕслĕхрен, Социализмлă Ĕç Геройĕ Т. Ф. Елдирева ертсе пыракан звено ĕçнех илсе пăхăпăр.

Çак звено ыраша 1946-мĕш çулта май уйăхĕн иккĕмĕш çуруйăхĕнче çĕртме тунă çĕр çине акса хăварчĕ. Çĕртме тăвас умĕн çак çĕре тислĕк тăкса лайăх çемĕçтернĕ, кашни гектар çĕр çине 50 тонна тислĕк тăкнă. Çĕртме сухине тракторпа 26—28 сантиметр тарăнăш сухаланă, икĕ хут культиваци тунă. Пĕрремĕш культивацине 1946-мĕш çулта июнĕн 20-мĕшĕнче, иккĕмĕшне — августăн 10-мĕшĕнче тума пуçланă. Ыраша звено августăн 20-мĕшĕнче акма тытăнса тăватă кун хушшинче акса пĕтернĕ. Акасса вунвиçĕ ĕретлĕ сеялкăпа, пĕр гектар пуçне 1,9 центнер вăрлăх акнă. Вăрлăха пур çĕрте те пĕр

пек, 4—5 сантиметр тарӑнӑш акнӑ. Ыраш калчи пӗр вӑхӑтра шӑтса тухса парка ҫитӗнчӗ, хӗл каҫма тӗмӗленсе ҫитнӗ парка калча юлчӗ.

Ҫуркунне юр ирӗлсе ҫитсенех звено ыраш калчине апат пама тытӑнчӗ. Кашни гектар пуҫне 4,5 центнер минераллӑ удобрени хывнӑ. Хӗл каҫиччен выртса пирченӗ ҫӗре кӑпкалатас тата калча тымарӗсем патне сывлӑш ҫӑмӑллӑн кӗтӗр тесе, ыраш калчисене пурне те сӳрелерӗмӗр. Звено ыраша июлӗн 24-мӗшӗнче, сӗтлӗх кӗрсен вырма пуҫларӗ. Вырасса ҫурлапа вырнӑ. Харпӑрлӑ сдельщина тата звенора социализмлӑ ӑмӑрту анлӑн сарӑлса кайни ыраша часах вырса пӗтерме май пачӗҫ. Ыраша эпир МК-1100 сложнӑй молотилкӑпа ҫапрӑмӑр. Ыраш вырнӑ чухне те, ҫавнашкалах кӗлтесене кӳрсе капана хывнӑ чухне те, авӑн ҫапнӑ чухне те, эпир тырпула тӑккаласси пе хытӑ кӗрешрӗмӗр.

Звено агротехника кӑтартӑвӗсене ҫурхи тырӑсем акса ҫитӗнтерес ӗҫре те тӗплӗн пурӑнӑҫласа пычӗ. Ҫураки ӗҫӗсене ир тата кӗске вӑхӑтрах туса пӗтернӗ. Ҫурхи тулӑна апрелӗн 27—28-мӗшӗсенче акса хӑварнӑ.

Ҫурхи тулла эпир малтан ыраш вырса илнӗ хире акрӑмӑр. Ҫак хирте, ыраш вырнӑ хыҫҫӑн, сентябрӗн пӗрремӗш числинче пуҫласа, кӗрхи ҫӗртме турӑмӑр, сухаласса 25—27 сантиметр тарӑнӑш сухаларӑмӑр. Ыраш акас умӗн ҫӗре органикӑллӑ удобренисемпе ҫителӗклӗ таранах ҫемӗҫтернипе тулӑ акас умӗн ҫуркунне хире тислӗк тӑкмарӑмӑр. Ҫӗре тӗпрен ҫемӗҫтерсе лайӑхлатас шутпа ҫуркунне минераллӑ удобренисемпе усӑ куртӑмӑр: кашни гектар ҫӗр пуҫне 1,5 центнер аммиачнӑй селитрӑпа сульфат аммони, 2,5 центнер суперфосфат хывса усӑ куртӑмӑр. Ҫуркунне суха касси сийӗ типме пуҫласанах участока сӳрелесе кӑпкалатрӑмӑр, ун хыҫҫӑн эпир трактор культиваторӗпе 11—12 сантиметр тарӑнӑш культивацилерӗмӗр. Ҫурхи тулӑна сеялкӑпа хӗреслӗ акрӑмӑр. Малтан участока тӑрӑхла, унтан урлӑлла акрӑмӑр. Акасса кашни хутӗнчех ҫур норма чухлӗ, гектар пуҫне 2 центнер шутласа акнӑ. Акмалли вӑрлӑха малтан ВИМ-2 машинӑпа тата триерпа сортланӑ, унтан алпа пӗрер пӗрчӗн уйӑрса тасатнӑ. Шӑтса тухнӑ тулӑ калчине аммиачнӑй селитрӑпа апат панӑ, ӑна кашни гектар пуҫне пӗрер центнер сапнӑ. Тулӑ хирӗнче ҫумкурӑкӗсем вуҫех те пулман тесен те юрать. Ҫӗре тракторпа тарӑн сухалани ҫумкурӑкӗсене пӗтерме май пачӗ. Ҫапла пулин те звено

çу каçиччен çумкурӑкӗсене икӗ хутчен çумларӗ, çапла туса вӑл хирте пӗр çумкурӑкӗ те хӑвармарӗ. Удобренин пӗр грамӗ те çумкурӑкӗсене ан лектӗр тесе, калчасене эпир яланах çумкурӑкӗсене çумланӑ хыççӑн апат панӑ. Звено урпапа сӗлӗ хирӗсенче те çакӑн пек агротехника ӗçӗсенех туса ирттерчӗ. Анчах урпапа сӗлле хӗреслӗ мар, ретлӗ çеç акнӑ. Ыраша искусственнӑй майпа шӑркалантарни унӑн тухӑçлӑхне нумай ӳстерме пулӑшрӗ.

Çакӑн пек ӗçсем туса ирттернӗ хыççӑн Т. Елдырева звени пӗрремӗш хирти 17 гектар çӗр çинчен кашни гектарӗнченех 26,7 центнер ыраш, улттӑмӗш хирти 19,8 гектар çӗр çинчен кашни гектарӗнченех 30,2 центнер ыраш пухса илчӗ. Звено çав çул кашни гектартан 33,7 центнер çурхи тулӑ, 24,2 центнер урпа, 29,2 центнер сӗлӗ пухса илчӗ. Пӗтӗм культурӑсене пӗрле илсе шутласан, звено кашни гектар пуçне вӑтам шутпа 29,2 центнер тырӑ илчӗ.

Çӗре органически тата минераллӑ удобренисемпе çемӗçтерес ӗç çине эпир уйрӑмӑнах тимлӗн çавӑрӑнса пӑхатпӑр. Пирӗн ӗçри опыт çӗре тӗрлӗ удобренисемпе çемӗçтерни тырпул тухӑçлӑхне ӳстерес ӗçре пысӑк вырӑн йышӑнса тӑнине кӑтартса пачӗ. Çакна эпир çакӑнтан та аван куратпӑр. Пӗрремӗш хирте пӗрремӗш бригадӑн 17 гектар çӗртме тунӑ участок пулнӑ. Çак хире кашни гектар пуçне 100 лавран пуçласа 200 лав таранччен тислӗк тӑкрӑмӑр. Тислӗке эпир 24 сантиметр тарӑнӑш çӗр айне туса хӑвартӑмӑр. Çӗртме тунӑ хыççӑн хире виçӗ хутчен хӗреслӗ культиваци турӑмӑр. Ыраш акас умӗн пӗр эрне маларах çӗре тӑваттӑмӗш хут культиваци турӑмӑр, çакӑн хыççӑн çӗр çине пӗр гектар пуçне пилӗкшер центнер фосфорлӑ удобрени сапрӑмӑр. Акасса эпир «Казанская 5+6» сортлӑ ыраш акрӑмӑр. Çак ырашӑн кашни пӗр пин пӗрчи 35 грамм туртнине шутласа, эпир ӑна гектар пуçне 1,9 центнер акрӑмӑр. Ыраш калчи юр айне пуличчен питӗ парка та лайӑх çитӗнсе юлчӗ. Çуркунне колхозниксем çак çӗр участокӗ çине 51 центнер сульфат аммони, 30 центнер суперфосфат, 20 центнер калий тӑварӗ сапрӗç. 17 гектар çӗр çине эпир пурӗ 101 центнер минераллӑ удобренисем кӑлартӑмӑр. Çакӑн хыççӑн мӗн пулса тӑчӗха? Ыраш калама çук лайӑх ӳссе çитӗнчӗ, унӑн пӗр тӗмӗри тунисем 15—16 хут ытларах пулчӗç. Кашни тӑваткал метр çинче 1.300 туна таран лайӑх ыраш çитӗнчӗ. Ыраш шӑркана ларас умӗн çак хир урлӑ вӑйлӑ çил-тӑвӑл иртсе кайрӗ, вӑл парка çитӗннӗ ыраша вырттарса хӑвар-

чĕ. Çакна пула ыраша пирĕн искусственнăй майпа шăркалантармалла пулчĕ. Шăркалантарасса эпир вĕренпе, шпагатпа мар, çăкаран тунă çăмăл шăччăсемпе хускатса шăркалантартăмăр. Нумайăшĕ çак участок çинчи ыраш калчине ытлашши апат панă пирки ырашăн тухăçлăхĕ нумай пулас çук тесе шухăшлатчĕç. Çапла шухăшлани вуçех тĕрĕс пулмарĕ: çак участок çинчен эпир кашни гектар пуçне 36 центнер ыраш çапса илтĕмĕр.

Çĕре 25—26 сантиметр тарăнăш сухалама палăртсан, нумайăшĕсем çакна малтан йышăнасшăн пулмарĕç. Пĕрисем: «çакăн тарăнăш сухалама юрамасть, тырă пулман çĕр сийне кăларма пулать», тетчĕç. Теприсем тата: «çакăн тарăнăш сухалас пулсан, плуга тракторсем туртаймĕç», тетчĕç. Эпир çĕре тарăн сухалассине пурăнăçларăмăр. Халĕ эпир 30—35 сантиметр тарăнăш сухалатпăр, трактористсем те çăмăллăнах çĕре сухалаççĕ.

Эпир уй-хир ĕçĕсене механизацилесси çине те уйрăмăнах тимлĕн çаврăнса пăхатпăр. Çĕре тракторсемпе сухаласа культивацилетпĕр, лашаллă ретлĕ сеялкăсемпе акатпăр, вырасса пуринчен ытларах машинăсемпе выратпăр, МК-1100 сложнăй молотилкăсемпе çапатпăр. Колхоз хуçалăхĕнче ялхуçалăх машинисемпе анлăн усă курни ĕç тухăçлăхне нумай хăпартать, ĕçсен срокне чакарса ĕçĕн пахалăхне нумай ӳстерет.

Пысăк тухăçлă тырпул илес ĕçре пирĕн колхоза Вăрнар МТС нумай пулăшрĕ, вăл тракторпа ĕçлемелли пур ĕçсене те вăхăтра тата пысăк пахалăхпа туса пычĕ.

## 5.

ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн пленумĕ «Вăрçă хыççăнхи вăхăтра ялхуçалăхне вăйлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă постановленире колхозсенчи ĕç нормисем кивелсе кайни тата вĕсене нумай чакарса туни ĕç тухăçлăхне малашне те хăпартса пырассине, тырпул тухăçлăхне тата выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне хăпартса пырассине чăрмантарса пыраççĕ тесе кăтартса пачĕ. Эпир çакна лайăх ăнланса илтĕмĕр, хамăр колхозра ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ нормăсем туса хатĕрлерĕмĕр. Çак ĕçе колхозра колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ суйланă уйрăм комисси туса хатĕрлерĕ, вăл комиссине ĕçре колхоз активĕ пулăшса пычĕ. Ĕçĕн çĕнĕ нормисене тунă чухне



*Хур ферми.*

əпир чи малтан колхозра малта пыракансемпе колхозник-стахановецсен ĕçри опычĕсене шута илнĕ.

Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ ĕçшĕн тӳлемелли çĕнĕ нормăсем çинчен çапла йышăнчĕ: «Колхоз хуçалăхĕн пур отраслисенче те ĕçшĕн планпа паракан заданисене епле пурнăçланине кура, пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ е выльăх-чĕрлĕх продуктивнăçне хăпартнă колхозниксемпе колхозницăсене ĕçшĕн ытларах тӳлес пулать. Çавнашкалах, сахал тухăçлă тырпул туса илнĕ е выльăх-чĕрлĕх енĕпе пĕчĕк кăтартусем панă колхозниксемпе колхозницăсене ĕçшĕн чакарса тӳлемелле».

Колхозниксен пухăвĕ йышăннинче тĕштырăсемпе пахчаçимĕç культурисен тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе уйхир ĕçĕсен бригадисемпе пахчаçимĕç тăвас тĕлĕшпе ĕçлекен звеносене план тăрăх панă заданисене ытлашши тултарнăшăн бригадирсемпе бригадăри колхозниксене, тырпул тухăçлăхне е пахчаçимĕç культурисен тухăçлăхне миçе процент хăпартнине шута илсе, ĕçшĕн хушса тӳлемелли çинчен кăтартса хăварнă. Планпа панă заданисене пурнăçламан бригадирсемпе бригадăри колхозниксен ĕçкунĕ шутĕнчен, вĕсем тырпул тухăçлăхне планпа панă заданипе мĕн чухлĕ тултарманнине шута илсе, çавăн

чухлӗ таранах ӗҫкунӗ чакармалла. Уй-хир ӗҫӗсен бригадисенчи колхозниксене, пахчаҫимӗҫ звенисемпе выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекен колхозниксене производство заданийӗсене ӳстерсе ытлашши тултарнӑшӑн ӗҫкунӗсем процентпа хушса панисӗр пуҫне ӗҫшӗн уйрӑмӑн натурӑпа тӳлес пулать.

Кам ытларах ӗҫлет, вӑл нумайтарах илет, текен принципа тунӑ ӗҫшӗн тӳлемелли ҫӗнӗ нормӑсемпе хаксем ӗҫкунӗ пӗлтерӗшне хӑпартрӗҫ. Уй-хир ӗҫӗсенче, пахчаҫимӗҫсем тунӑ ҫӗрте, выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекен колхозниксемпе колхозницӑсем тӳрӗ кӑмӑлпа тӑрӑшса ӗҫленӗшӗн ытларах ӗҫкунӗ илекен пулчӗҫ. Уй-хирсенче ӗҫленӗшӗн, ҫуракинче, утӑ ҫулнӑ ҫӗрте, тырпулсене пухса кӗнӗ ҫӗрте, авӑн ҫапнӑ ҫӗрте тата ытти ӗҫсенче ӗҫленӗшӗн ӗҫкунӗсем васкавлӑ мар тата пысӑк ырӑн йышӑнса тӑман ӗҫсенчинчен ытларах паратпӑр.

Производство планӗсене ирттерсе тултарнӑшӑн хушса тӳлени, ӗҫшӗн натурӑпа хушса тӳлени, ӗҫре харпӑрлӑ сдельщинӑна анлӑн сарса пыни, ҫаксем пурте тырпул тухӑҫлӑхне, выльӑх-чӗрлӗх продуктивнӑҫне, колхозӑн обществӑллӑ пуянлӑхне хӑпартма пулӑшаҫҫӗ.

Уй-хир ӗҫӗсен бригадисене, пахчаҫимӗҫ тӑвас тата сад ӗрчетес тӗлӗшпе ӗҫлекен кашни бригадӑпа звенона, выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекен работниксене тырпул тухӑҫлӑхне тата выльӑх-чӗрлӗхсен продуктивнӑҫне ӳстерес тӗлӗшпе уйрӑм заданисем паратпӑр. Ҫӗр мӗнлине шута илсе, кашни уй-хир ӗҫӗн бригади уйрӑм задани тӑрӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх ӗрчетес тӗлӗшпе кашни ӗне сӑвакана, сысна, пӑрусем пӑхакана, фермӑсенчи ытти работниксене те кашни уйӑхрах уйрӑм задани паратпӑр. Заданисене ытлашши тултарнӑшӑн ферма заведующисемпе фермӑри работниксене ӗҫшӗн 15 процент ӗҫкунӗ хушса тӳлетпӗр, производство заданийӗсене тултараймасан, ӗҫкунӗсене 15 процент чакарса тӳлетпӗр. Ӗҫкунӗсене хушса е чакарса тӳлессине яланах колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ сӳтсеявса татса парать.

Выльӑх-чӗрлӗх фермисенче ӗҫлекенсене ӗҫшӗн ҫакӑнта кӑтартнӑ чухлӗ тӳлетпӗр.

Аратлӑ лашасемпе ӗҫ лашисене пӑхакан конюх ҫумне 10—12 лаша ҫирӗплетсе панӑ, лашасем пӑхнӑшӑн ӑна кашни лашашӑн кунне ҫакӑн чухлӗ ӗҫкунӗ ҫырса паратпӑр: лашасем лайӑх та самӑр пулсан—0,13 ӗҫкунӗ, ла-

шасем вăтам пулсан—0,10 ĕçкунĕ, лашасем начар пулсан—0,07 ĕçкунĕ. Сывлăхлă çуралнă тихана пăхса çитĕнтернĕ кашни тихашăн—10 ĕçкунĕ, уй-хиртен витене турттарса килнĕ кашни пĕр центнер выльăх апачĕшĕн 0,20 ĕçкунĕ çырса паратпăр.

Ĕне пăхакан дояркăна 12—14 ĕне пăхнăшăн хĕллехи вăхăтра çакăн чухлĕ ĕçкунĕ çырса паратпăр: ĕнесем самăр пулсан, кунне кашни ĕнешĕн 0,03 ĕçкунĕ, ĕнесем вăтамран начар пулсан, ĕçкунĕсем çырса памастпăр. Доярка пăхакан кашни ĕнепе пушмак пăруран çуралнă пăрушăн—6 ĕçкунĕ, çирĕплетсе панă ĕнесем хушшинче хĕсĕр ĕне пĕрре те пулмасан—20 ĕçкунĕ, хăйсене çирĕплетсе панă ĕнесенчен суса илнĕ кашни 100 литр сĕтшĕн—1,80 ĕçкунĕ çырса паратпăр.

Сысна пăхакансене ĕçшĕн çакăн чухлĕ тӳлетпĕр: чĕрĕ виçепе 8 килограмм таран туртакан кашни çăвăршăн—2 ĕçкунĕ, 12 килограмм—4 ĕçкунĕ, 12 килограмм ытларах туртакан кашни çăвăршăн—6 ĕçкунĕ, 80 килограмм ытларах туртать пулсан, кашни сыснашăн—8 ĕçкунĕ, чуптарса хăварнă кашни сысна амишĕн—2 ĕçкунĕ çырса паратпăр.

Сурăх пăхакансене ĕçшĕн çакăн чухлĕ тӳлетпĕр: тĕрĕс-тĕкĕл пăхса ӳстернĕ кашни путекшĕн—1,50 ĕçкунĕ, касса илнĕ кашни килограмм çăмшăн—0,5 ĕçкунĕ, хĕллехи вăхăтра пăхса усранă кашни сурăхшăн кунне—0,02 ĕçкунĕ çырса паратпăр.

Выльăх-чĕрлĕх фермисенче ĕçлекенсен ĕçри ответлăхне хăпартас шутпа, хĕсĕр юлнă кашни ама выльăхшăн, хăм пăрахнă кашни кĕсрешĕн, вилнĕ кашни çамрăк выльăхшăн ĕçкунĕсем чакаратпăр.

Лартнă çĕрулмине, выльăх апачĕлĕх акнă кăшмана, пахчаçимĕçсене акса пăхса ӳстерес ĕçе эпир бригадăсемпе звеносем хушшинче уйрăм колхозницăсем çумне çирĕплетсе паратпăр, вĕсем вара асăннă çимĕçсене акса лартса хăвараççĕ те вĕсене пухса кĕрсе склада парниччене пăхса çитĕнтереççĕ. Çакăнта асăннă çимĕçсемшĕн эпир склада панă кашни центнершăн çакăн чухлĕ ĕçкунĕ паратпăр: кашни пĕр центнер çĕрулмишĕн, выльăх кăшманĕшĕн тата столовăй кăшманĕшĕн—0,50 ĕçкунĕ, купăсташăн—0,70 ĕçкунĕ, хăяршăн—0,70 ĕçкунĕ, помидоршăн—1,00 ĕçкунĕ, суханшăн—1,50 ĕçкунĕ паратпăр. Çĕрулмине, столовăй кăшманне тата ытти çимĕçсене лартнăшăн, вĕсене пăхса çитĕнтернĕшĕн тӳленĕ ĕçкунĕсен

хисепĕ чăннипе пухса илнĕ асăннă çимĕçсен хисепĕ тăрăх тӳлемелли шутран иртсе каять пулсан, ытлашши хушса панă ĕçкунĕсене чакаратпăр. Йăран çине куçарса лартмалли пахчаçимĕçсен калчисене пăхса ӳстернĕшĕн те ĕçкунĕсем миçе калча пăхса ӳстерни тата йăран çине лартма миçе тĕп калча пани тăрăх хисеплесе тӳлетпĕр.



*Кольцовка ялĕнчи вăтам шкул.*

Йывăç лартнă çĕрте тата садра ĕçлекен колхозниксене ĕçшĕн çуркунне лартса çитĕнтернĕ, кĕркунне актпа панă кашни пĕр йывăçшăн 0,50 ĕçкунĕ паратпăр. Хăрса ларнă е мĕне те пулин пула пĕтнĕ йывăçшăн ĕçкунĕ памастпăр. Çĕр çине кăларса лартнă йывăçсенчен 85 процентчĕ ытла лайăх ӳссе çитĕнеççĕ пулсан, звенона 15 процент таран хушса ĕçкунĕ паратпăр.

Ĕçшĕн мĕн чухлĕ тӳлемелли тăрăх комисси туса хатĕрленĕ ĕç нормисемпе хакĕсен проектне колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче çирĕплетиччен производство совещанийĕсемпе бригадăсен пухăвĕсенче анлăн сӳтсе-явнă. Проекта хапăл туса, колхозниксем унта паха улшăнусем нумай кĕртрĕç. Сăмахран, колхозниксем сĕнни тăрăх, уйрăмăнахваскавлă тумалли ĕçсемшĕн (тырă акнишĕн, утă çулнишĕн, тырпула пухса кĕртнишĕн, планран ирттерсе ĕçленĕшĕн) икĕ хут ӳстерсе тӳлемелле тунă.

## 6.

1947-мĕш çулхи тупăшсене валеçнĕ чухне эпир ĕçре малта пыракансене ĕçшĕн хушса тӳлемелли çинчен колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ кăтартса хăварнисене пурне те пурăнăça кĕртрĕмĕр.

Çĕр пахалăхĕпе ытти условисене шута илсе, колхозниксен пĕрлешӳллĕ пухăвĕ уй-хир бригадисене çакăнта кăтартнă чухлĕ тырпул туса илме план çирĕплетсе пачĕ: пĕрремĕш бригадăна—24,2 центнер, иккĕмĕшпе виççĕмĕш бригадăсене—25-шер центнер, тăваттăмĕш бригадăна—24,2 центнер.

Çĕр участокĕсене эпир бригадăсене пусуçаврăнăш срокĕ пĕтичченех çирĕплетсе патăмăр, çĕр участокĕсене юпасем лартса уйăрнă, вĕсенĕ план çине те лайăх палăртса ӳкĕрсе хунă. Тырпул тухăçлăхне эпир бригадăсемпе звеносем тăрăх уйрăмăн шута илетпĕр. Бригадăсемпе звеносем тырпулсене уйрăмăн вырса, кĕлтесене пĕр çĕре уйрăмăн турттарса капана хывнă, çапасса та уйрăмăн çапнă. Тырпулсене çапса пĕтернĕ хыççăн, кашни бригадăн тырпул тухăçлăхĕ çакăн чухлĕ тухрĕ: пĕрремĕш бригада 130 гектар çинчен кашни гектартанах 27,8 центнер тырă пухса илсе, колхоз складне 3.616 центнер тырă хыврĕ. Иккĕмĕш бригада 149 гектар çинчен кашни гектарĕнченех 27 центнершар пухса илчĕ, колхоз складне вăл 4.025 центнер тырă хыврĕ. Виççĕмĕш бригада 124 гектар çинчен кашни гектарĕнчен 25,4 центнер пухса илчĕ, колхоз складне вăл пурĕ 3.150 центнер тырă хыврĕ. Тăваттăмĕш бригада 127 гектар çинчен кашни гектарĕнченех 27,6 центнершар пухса илчĕ, вăл колхоз складне 3.496 центнер тырă хыврĕ.

Çапла ĕнтĕ, пĕрремĕшпе тăваттăмĕш бригадăсем тырпул тухăçлăхне ӳстересси тăрăх колхоз панă плана 10 процент ытларах, иккĕмĕш бригада—8 процент, виççĕмĕш бригада—1,6 процент ӳстерсе тултарчĕç. Колхоз складне панă кашни центнер тĕштырăпа пăрçа йышши культурăсемшĕн пĕрремĕш бригада 2,76 ĕçкунĕ, иккĕмĕш бригада—2,68 ĕçкунĕ, виççĕмĕш бригада—3,52 ĕçкунĕ, тăваттăмĕш бригада—2,90 ĕçкунĕ расходланă.

Кам епле ĕçленине кура, эпир ĕçшĕн колхозниксене е ытларах, е сахалтарах тырă патăмăр.

Тĕслĕхрен, пĕрремĕш бригадăри Николай Першуткин колхозниках илĕпĕр. Унăн çемьинчи ĕçлеме пултаракан виçĕ çын 1947-мĕш çулта пурĕ 645 ĕçкунĕ, вăл шутра 368 ĕçкунне уй-хирте ĕçлесе илнĕ. Бригадăна планран irttерсе тырпул туса илнĕшĕн 36 ĕçкунĕ хушса панă.

Колхозри тырра иртнĕ çулта мĕнпур ĕçкунĕсем тăрăх вăтам шутпа кашни ĕçкунĕ пуçне 5,7 килограмм валеçнĕ. Плана ӳстерсе тултарнăшăн тата уй-хирте лайăх ĕç-

ленĕшĕн эпир ĕçкунĕ пуçне 1,3 килограмм тырă хушса панă. Çапла вара, асăннă колхозник хуçалăхĕ, хушса панă ĕçкунĕсемпе пĕрле шутласан, иртнĕ çулта пурĕ 38,82 центнер тырă, кунсăр пуçне 4,78 центнер тырă хушса пани тăрăх илчĕ. Çапла ĕнтĕ, Н. Першуткин çемйи мĕн пурĕ 43,6 центнер тырă, урăхла каласан, кашни ĕçкунĕ пуçне 6,4 килограмшар тырă илчĕ.



*Амбулатори тата ача çуратмалли çурт.*

Виççĕмĕш бригадăри колхозниксене тата уй-хир ĕçĕнче ĕçлемен колхозниксене шутламасăр, ытти колхозниксене пурне те, вăл шутра колхоз хуçалăхĕн ытти отраслисенче ĕçлекен колхозниксене те, ĕçшĕн çакăн пек йĕркепе хушса тӳленĕ. Вĕсене тырă вăтам шутпа кашни ĕçкунĕ пуçне 5,7 килограмшар валеçсе панă. Вăтам шутпа илсен, пирĕн колхозра кашни хуçалăх 34,4 центнершар тырă илнĕ. Уйрăм колхозниксен хуçалăхĕсем пĕр ĕçкунĕ пуçне çичшер килограмм таран тырă илчĕç.

Эпĕ малтанах каларăм, вăрçăра вилнĕ ывăлсен çемйисене эпир, ĕçкунĕсем тăрăх валеçсе панисĕр пуçне, пулăшу шучĕпе татах тырă хушса патăмăр. Çак пулăшăва эпир колхозăн мĕнпур тырринчен икĕ процент илсе тунă фондран патăмăр.

Вăрçăра вилнĕ ывăлсен арăмĕсем колхозри тырра валеçес вăхăт тĕлне пурĕ 8.696 ĕçкунĕ тунă. Пулăшу шучĕпе вĕсене хушса 260,76 центнер тырă панă. Çапла ĕнтĕ,

вăрçăра вилнĕ çынсен арăмĕсем, ĕçкунĕсем тăрăх валеçнĕ тырăсăр пуçне, пулăшу фондĕнчен татах кашни ĕçкунĕ пуçне виçшер килограмм тырă илчĕç.

Кунта çакăн пек ыйту сиксе тухма пултарать: эпир мĕншĕн-ха ĕçшĕн хушса тӳленĕ чухне, тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе государство пĕр гектар пуçне панă 13,8 центнер плана мар, бригадăсене хамăр колхоз панă плансене шута илтĕмĕр? Ман шутпа, ĕçшĕн хушса тӳлес йĕркене тырпул тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе государство панă план тăрăх кăна мар, колхозра вăтам шутпа мĕн чухлĕ тырпул пухса илни тăрăх пурнăçласа пырсан авантарах пек туйăнать. Эпир хамăр колхозра ĕçшĕн тырпул тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе государство панă план тăрăх хушса тӳленĕ пулсан, уй-хирте ĕçлекен колхозниксем пирĕн кашни ĕçкунĕ пуçне пăтçуршар тырă, хуçалăхăн ытти отраслисенче ĕçлекенсем ĕçкунĕ пуçне çакăнтан темиçе хут сахалтарах тырă илнĕ пулĕччĕç. Паллах ĕнтĕ, тырра çакăн пек йĕркепе валеçнĕ пулсан, пирĕн кăмăлсăр юлнă колхозниксем нумай пулнă пулĕччĕ, çакă вăл артель хуçалăхне малашне пур енчен те аталантарса пыма чăрмантарнă пулĕччĕ.

Ĕçшĕн çĕнĕ йĕрке тăрăх тӳлемелле туни пирĕн колхозниксене тата пысăк тухăçлă тырпулсем туса илме хавхалантарса пычĕ.

## 7.

Хамăрăн ĕçри практикăра эпир пур ĕçсене те тĕрĕс организацилесе планлама тăрăшатпăр, мĕншĕн тесен эпир çакăнсăр колхоза малашне хуçалăхпа организаци тĕлĕшĕнчен çирĕплетсе пырас задачăна, колхозăн обществăллă пурлăхне ӳстерсех пырас задачăна ăнăçлăн пурăнăçлама пултараймастпăр.

Ĕçкунĕ пуçне тивекен тупăш хисепне ӳстерес тата ĕçкунĕсене тĕрĕс расходлас тесе, эпир иртнĕ çул пуçламăшĕнчех колхоз производствин отраслисем тăрăх мĕн чухлĕ ĕçкунĕ расходламалли лимит туса çирĕплетрĕмĕр. Çак лимит тăрăх, эпир уй-хир ĕçĕсен бригадисенче, фермăсенче, строительство ĕçĕнче, колхозăн хушма хуçалăхĕнче тата ытти ĕçсенче те мĕн чухлĕ ĕçкунĕ расходламаллине палăртса хутăмăр. Çапла туни бригадирсен, фермăсемпе предприяти руководителĕсен ĕçкунĕсене расходлас ĕçри ответлăхне пысăклатрĕ, ĕçкунĕсем расходлас ĕç çине вĕсене хуçалăхла пăхма вĕрентрĕ. Çакна

пула колхоз 1947-мĕш çулта ĕçкунĕсене планра палăртнинчен сахалтарах расходларĕ. Колхоз хуçалăхĕн мĕнпур отраслисем тăрăх иртнĕ çулта пурĕ 120.736 ĕçкунĕ расходлама палăртнă пулсан, колхоз пурĕ 103.766 ĕçкунĕ расходларĕ, урăхла каласан, планпа палăртнинчен 16.970 ĕçкунĕ каярах расходларĕ. Ĕçе организацилес тĕлĕшпе туса иттернĕ мероприятисенчен уйрăмăнах хамăр колхозра пуриншĕн те канмалли кун тунине палăртас пулать. Анчах уй-хирти хĕрӳ ĕç вăхăчĕсенче колхозниксем пĕрлехи пухăвĕ колхоз правленине канмалли кунсем тумалла мар, хĕрӳ ĕç вăхăчĕсенче ĕçленĕшĕн урăх вăхăтсенче канмалла тума хушса хăварчĕ.

Ĕçе тĕрĕс организацилес тĕлĕшпе бригадăсемпе звеносенчи çынсем улшăнмасăр ĕçлени, бригадăсемпе звеносене пусуçаврăнăш срокĕ пĕтиччченех уйрăм çĕр участокĕсем çирĕплетсе пани пысăк вырăн йышăнса тăрать. Иртнĕ çул пуçламăшĕнче эпир çынсене уйрăм бригадăсем, звеносем, фермăсем, хушма хуçалăхсем çумне çирĕплетрĕмĕр, çулталăк хушшинче эпир пĕр çынна та пĕр ĕçрен тепĕр ĕçе куçарса лартмарăмăр. Çапла туса эпир ĕçри хуçасăрлăха тĕпренех пĕтертĕмĕр. Пирĕн кашни колхозник колхоз производстви ĕçĕнче хăй мĕнле вырăн йышăнса тăнине лайăх ăнланать, вăл хăйне шанса панă ĕçшĕн ответ тытать. Çакă ĕçри тухăçлăха хăпартма питĕ нумай пулăшрĕ.

Çынсене бригадăри ĕçсене вырнаçтарса лартнă чухне эпир кашни колхозник пултарулăхне, унăн квалификацине, ĕçĕн майĕсене пĕлнипе ĕçри опычĕсене шута илнĕ. Эпĕ маларах бригадăсене пусуçаврăнăш срокĕ пĕтиччченех уйрăм çĕр участокĕсем çирĕплетсе пани çинчен каларăм. Çакна пула, пирĕн колхозниксем çĕр участокĕсене лайăх сухаласа çемĕçтереççĕ, чăн-чăнах тăрăшса ĕçлеççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем тăрăшса ĕçлесен тырă лайăх пулнине, çав тырра вара урăх никам та мар, хăйсемех пухса илессине лайăх ăнланса тăраççĕ. Бригада тырпул тухăçлăхне хăпартас тĕлĕшпе хăйне панă плана иттерсе тултарсан, уншăн ăна хушса ĕçкунĕсем параççĕ тата натурăпа тырă хушса тӳлеççĕ.

Пирĕн бригадирсемпе звеньевойсем те темиçешер çул хушши пĕр улшăнмасăр ĕçлеççĕ, бригадăсемпе звеносене ĕçре лайăх ертсе пыраççĕ, вĕсем агротехника кăтартăвĕсене лайăх пĕлеççĕ, ĕçсене организацилес тĕлĕшпе те пысăк опытсем пухрĕç.

Пирĕн колхозра тăватă уй-хир бригади ĕçлет. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ кашни бригадăнах тырпул тухăçлăхне хăпартасси, мĕн чухлĕ тыра пухса илесси, мĕн чухлĕ удобренисем хатĕрлесе уй-хире кăларасси тăрăх уйрăм заданисем çирĕплетсе парать. Кашни бригада хĕл пуçламăшĕнчех çуракине ирттерме хатĕрленме тытăнать. Бригадăсем хире тислĕк кăлараççĕ, чугун çул станцинчен минераллă удобренисем хăйсен çĕр участокĕсене планпа пăхнă таран турттараççĕ, акмалли вăрлăхсемпе ĕç инвентарĕсене хатĕрлеççĕ. Вăрманта ĕçлемелле пулсан та кашни бригадăнах уйрăм заданисем паратпăр, çав заданисене вĕсем хăйсен çынĕсемпех тата хăйсене çирĕплетсе панă ĕç лашисемпех ĕçлесе тултараççĕ.

Звеносем тырра уйрăмăн акса уйрăмăн пăхса çитĕнтереççĕ, уйрăмăнах пухса кĕртеççĕ. Авăн çапасса бригаднăй методпа, анчах звеносем тăрăх уйрăмăн çапатпăр.

Колхозра звеносене тахçанах организациленĕ. Анчах малтанхи вăхăтра вĕсем хут çинче кăна шутланса тăнă, çавăнпа вĕсем хăйсен ĕç результачĕсене те кăтартса пама пултарайман. Звеносене çĕр участокĕсем те çураки умĕн е çураки ирттернĕ хыççăн тин уйăрса панă. Звеносем акнă тырпула уйрăмăн пăхса çитĕнтернĕ, уйрăмăн вырнă. Анчах вырса пухнă тырра звеносем тăрăх пĕр çĕре пухса уйрăмăн çапман, çакна пула вара тырпулсен тухăçлăхĕ мĕн чухлĕ тухнине те звеносем тăрăх уйрăмăн шута илсе пырайман. Вăрçă вăхăтĕнчи çулсенче звеносем вуçех те пулман темелле.

1947-мĕш çул пуçламăшĕнче эпир звеносене çĕнĕрен организацилерĕмĕр. Çынсем тĕлĕшпе илсен, пирĕн звеносем пурте пĕрпек, звеносенчи çынсен хисепне эпир нихçан та улăштарман, çакна пула пирĕн звеносенче пĕринче те хуçасăрлăх пулман.

Колхозра кашни уй-хир бригадинчех икшер звено организациленĕ. Çапла ĕнтĕ, пирĕн колхозра пурĕ 8 звено ĕçлет. Çынсем тĕлĕшĕпе илсен, пирĕн звеносем пысăк шутланаççĕ, кашни звено çур бригада пулса тăрать. Бригадăсене çирĕплетсе панă пекех, эпир звеносене те бригадăсемпе танлаштарсан, çурри чухлĕ тĕштыра культурисем, çĕрулми çирĕплетсе паратпăр. Асăннă культурăсене эпир звеносене пусуçаврăнăш планне тата государство планĕ тăрăх вĕсене мĕн чухлĕ акмаллине шута илсе çирĕплетсе панă. Звеносен

кашни пусуçаврăнăшĕнчех хăйсен уйрăм участокĕсем пур. Бригада участокĕсене юпасем лартса уйăрнă пекех, звеносен участокĕсене те юпасемпе уйăрнă. Участоксене звеносем çумне пусуçаврăнăш срокĕ тухиччене çирĕплетнĕ.

Звеньевой пирĕн колхозра бригадиран еçри пĕрремĕш помощникĕ пулса тăрать. Звенона çирĕплетсе панă участок çинче ĕçленисĕр пуçне звеньевой бригадир паракан заданисем тăрăх, час-часах бригадăра группловод, аслă рабочий пулса ĕçлет. Бригадăри колхозниксен ушкăнне мĕнле те пулин ĕç тума парса, бригадир час-часах çав ушкăн тăвакан ĕçе звеньевоя ертсе пыма хушать. Звеньевой вара, колхозниксем епле ĕçленине тĕрĕсленисĕр пуçне кашни колхозник мĕн чухлĕ ĕçленине шута илет, уи çинчен çав кунах бригадира пĕлтерет.

Уй-хир ĕçĕсене бригадирсемпе звеньевойсем хăйсем ертсе пыраççĕ. Иртен пуçласа каçченех вĕсем ытти колхозниксемпе хирте ĕçлеççĕ. Звеньевойсем звено членĕсемпе пĕр танах ĕçлеççĕ, звено членĕсем тăвакан ĕçех тăваççĕ.

Уй-хирти хĕрÿ ĕçсем вăхăтĕнче эпир тул çутăлнăçутăлманах ĕçе тухатпăр. Бригадирсенчен эпир çакăн пек вăхăтсенче пуринчен малтан вăранма, бригада ĕçе хатĕррипе хатĕрмаррине тĕрĕслеме, кулленех ĕçе тĕрĕс йĕркелесе пыма ыйтатпăр. Бригадирсемпе звеньевойсене эпир обществăллă ĕçе тÿр кăмăлпа туса, ĕçре пурне те лайăх тĕслĕхсем кăтартса пыма хушатпăр. Колхозри социализмлă ăмăрту ĕçĕнче иртнĕ çулта пĕрремĕш вырăна Социализмлă Ĕç Геройĕсен А. Д. Ашанин, В. Д. Ашанин, Т. Ф. Елдырева, Е. Е. Ерошина юлташсен бригадисемпе звенисем йышăнчĕç.

Производствăра ялан ĕçлекен бригадăсемпе пĕрле колхозра уйрăм ĕçсене туса пыракан уйрăм ушкăнсем организациленĕ. Çак ушкăнсем бригадăсенчен вĕсенче çынсен хисепĕ сахал пулнипе çеç уйрăм тăраççĕ. Бригадăсем пекех, çак ушкăнсем те колхозра яланах уйрăм ĕçсем тăваççĕ, вăл ушкăнсем хăйсен ĕçĕнче хуçалахăн уйрăм отраслисен заведующийĕсене пăхăнса тăраççĕ. Çĕнĕ çуртсем тăвас е çуртсене юсас тĕлĕшпе колхозра платниксен ушкăнĕ ĕçлет. Çавăн пекех тата

колхозра кĕперсем тăвакан, пĕве пĕвелекен ушкăнсем, электриксемпе радистсем тата ыт. те ĕçлеççĕ.

Кадрсен хисепĕ яланах пĕр пек пулнипе, вĕсем хăйсен квалификацине ӳстерсех пынипе эпир хамăрăн пысăк артель хуçалăхĕнчи пур ĕçсене те ăнăçлăн, ĕçре йывăрлăхсем тĕл пулмасăрах вăхăтра туса пыратпăр. Уйхирсенче хĕрӳ ĕçсем вăхăтĕнче те пирĕн колхозра тăтăшах хушма хуçалăхăн тĕрлĕ предприятийĕсем ĕçлеççĕ. Çак хушăрах эпир строительство ĕçĕсене те пĕр чарăнмасăр туса пыратпăр, яла çĕнетсе илемлетес тĕлĕшпе тăрăшса ĕçлетпĕр. Çак ĕçсене туни пĕрре те уй-хир ĕçĕсене вăхăтра ĕçлесе пыма чăрмантармасть.

Уй-хирсенчи пур тĕп ĕçсенче те колхозниксен ĕçĕсене харпăрлă сдельщина тата пĕчĕк ушкăнсемпе ĕçлес никĕс çинче организациленĕ. Колхозниксен ĕçĕсене çапла организацилени калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать, вăл ĕç тухăçлăхне хăпартма нумай пулăшать. Ĕçсене çакăн пек организацилемесĕр ĕç тухăçлăхне хăпартасси çинчен сăмах та пулма пултараймасть.

Уй-хирсенчи ĕçсене эпир палăртнă сроксенче туса пыратпăр пулсан, çакна тума пире чи малтан ĕçе сдельщина никĕсĕ çинче организацилени пулăшать. Пĕр-пĕрне ĕçре чăрмантарса пысăк ушкăнсемпе ĕçлес йĕркене эпир тахçанах пăрахăçланă. Тырпулсене пухса кĕрес умĕн, хире ĕçлеме тухиччен, бригадирсемпе звеньевойсем хире малтанах пĕчĕк участоксем çине пайлаççĕ, вĕсене пĕр-пĕринчен пĕчĕк маяксем лартса уйăраççĕ. Çак участоксем çинче çынсем колхозниксен пĕчченшерĕн е иккĕн-виççĕн ĕçлеççĕ. Çапла ĕнтĕ, кашни çын ĕçĕ куç умĕнче лайăх палăрса тăрать. Ĕçе çапла организацилесен, ĕçлеме ӳркенекен кахал çын, темĕнле тăрăшсан та, тӳр кăмăлпа ĕçлекен колхозниксем хӳттинче пытанса юлма пултараймасть. Çак йĕркепе ĕçленĕ чухне кашниех хăйĕн участокĕ çинчи тырра хăвăртрах та тасарах вырса пĕтерме, вăхăта тăсмасăрах тепĕр участок çине куçма тăрăшать. Тырă выракансем хушшинче социализмлă ăмăрту анлăн сарăлса кайрĕ. Çапла тăрăшса ĕçленине пула, лайăх ăнса пулнă çăра та çӳллĕ ыраша планпа кунне 0,12 гектар вырасси çăмăл пулман пулин те, тырă выракансенчен 70 процентĕ ытларах кулленхи ĕç нормисене ытлашшипех тултарса ĕçлерĕç. Утă çулнă, ытти ĕçсене тунă чухне

те эпир харпăрлă ĕç сдельщинине çак йĕркепех пурăнăçа кĕртсе пытăмăр.

Производство планĕсене эпир яланах тĕплĕн шутласа тăватпăр. Уй-хирсенче тумалли ĕçсене пурне те шута илетпĕр, вĕсене камсем тата мĕнле срокра тумаллине конкретлă кăтартса паратпăр. Çавăнпа та пирĕн ĕç графикĕсем нихçан та пăсăлмаççĕ. Ĕçе кăтартнă срокра тăвасси—пирĕншĕн закон пулса тăрать.

Колхоз—нумай енлĕ хуçалăх. Час-часах уй-хирсенчи хĕрӳ ĕçсем вăхăтĕнче пĕр вăхăтрах тырă вырмалла, авăн çапмалла, кĕрхи тырăсене акмалла, государствăна тырă памалла тата ытти ĕçсене те тумалла пулать. Çакнашкал условисенче çынсене пурне те хăйсен вырăнĕсене тĕрĕс те пĕлсе вырнаçтарса лартни, çак тĕлĕшпе пур енчен те тĕплĕн шухăшласа тунă план, ĕçсене вăхăтра та пысăк пахалăхпа туса ирттерес ĕçре питĕ пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ.

Хамăрăн ĕç планĕсене эпир организациллĕ ĕçсем туса ирттернипе çирĕплететпĕр. Тĕслĕхшĕн, кунта çаках илĕпĕр: планпа минераллă удобренисем турттарса килме палăртатпăр пулсан, çакăнпа пĕрлех эпир минераллă удобренисене кам илмеллине те, удобренисене илсе килме кирлĕ михĕсемпе рагажасене кам хатĕрлесе хумаллине те, кашни бригадăн мĕн чухлĕ удобрени илсе килмеллине те тата ыт. те кăтартса хăваратпăр.

Пирĕн колхозра пĕр-пĕр колхозник наряда пурăнăçламанни, нимĕн сăлтавсăрах ĕçе тухманни, ĕçрен иртерех тавăрăнни тахçанах пĕтнĕ. Колхозниксем ĕçрен кулленхи задание ирттерсе тултарнă хыççăн тин киле тавăрăнаççĕ, вĕсем ĕçкунне питĕ пысăк хакласçĕ. Колхозра ĕç минимумне тултарман пĕр колхозник та çук.

Пирĕнпе юнашар хăшпĕр колхозсем пысăк тухăçлă тырпул туса илеймеççĕ-ха. Вĕсем хăйсен колхозникĕсен ĕçкунĕсем çине тивмелли тырă хисепне уй-хирсенчи ĕçсене кая юлса тунипе чакарса пыраççĕ. Тырпулсене акнă вăхăтра эпир пĕр кун та кая юлас мар тесе тăрăшатпăр пулсан, вăл колхозсем хăшпĕр чухне тырпулсене 5—10 кун кая юлса акса хăвараççĕ. Çапла тунипе вĕсем тырпул тухăçлăхне хăпартаймаççĕ, хăйсен колхозне пысăк сиен кӳреççĕ. Эпир уй-хирсенчи ĕçсене пурне те агротехникăн чи лайăх срокĕсенче туса ирттеретпĕр.

Пирен кашни колхозник хăй ĕçлекен звено, бригада колхоз ятне тивĕçлĕн те чыслăн тытать. Ятшăн çеç тунă кашни начар ĕçе пирĕн колхозниксем тивĕçлипе тишкерсе критикăлаççĕ. Япăх ĕçлекенсене эпир ĕç патĕнчен хăваласа яна, хальхи вахăтра колхозра япăх, ӳркенсе ĕçлекен пĕр çын та çук.

Пирĕн колхозниксенчен нумайăшĕсем пилĕк çул хушшинче тĕрлĕ шкулсемпе курссенче вĕренчĕç. Хăшпĕр колхоз руководителĕсем, ĕçре кирлĕ çынсар тăрса юлатпăр тесе, курссене вĕренме пултарайман çынсене ярассĕ. Эпир яланах пуранаç çине малашнехи вăхата шута илсе пăхатпăр. Çавăнпа та эпир пĕр-икĕ уйăх хушши бригадирсăр, ферма заведующисĕр е колхоз хуçалахĕн мĕнле те пулин отраслин руководителĕсĕр тăрса юласран шикленсе тамастпăр, тĕрлĕ курссене вĕренме колхозăн тĕп работникĕсене яратпăр. Колхозăн ытти членĕсене пурне те тенĕ пекех эпир колхозра çулсеренех организацилекен тĕрлĕ курссемпе кĕске вăхăтлăха уçалакан кружоксенче агрономипе зоотехника çинчен вĕрентетпĕр. Çакна пула пирĕн колхозра пур ответлă вырăнсенче те хăйсен ĕçне лайăх пĕлекен çынсем ĕçлеççĕ. Юлашки çулсенче колхоз специалисчĕсем: учительсем, трактористсем, киномеханиксем, электромонтерсем, радистсем, шоферсем, наборщиксем, счетоводсем тата ыт. те çитĕнчĕç. Малашне эпир хамăр умма хамăр ялтах тĕрлĕ специалистсем: агрономсем, врачсем, ветеринари работникĕсем, техник-строительсем хатĕрлес задача лартатпăр. Çак задачăна эпир пурăнăçа кĕртетпĕрех.

Ĕçе тĕрĕс организацилени, ĕçри пысăк тухăçлăх, ĕç дисциплини çирĕп пулни пире агротехника кăтартăвĕсене пурне те вахăтра тата тĕрĕс пурăнăçлама майсем туса параççĕ.

Пирĕн колхоз хăйĕн çитĕнĕвесемпе тивеçлипех мухтанма пултарать. Çак çитĕнӳсене эпир ĕçсене тĕрĕс организацилесе тата малта пыракан агротехника кăтартăвĕсене пурăнăçа кĕртсе пынипе кăна мар, колхоза ертсе пырас ĕçре колхозлă пурăнăçăн тĕп законне—ял хуçалăх артелĕн Уставне тĕрĕс пăханса пынипе те турăмăр.

Устав колхоза ертсе пырас ĕçре демократиллĕ никĕссене тĕрĕс пурăнăçласа пыма хушать. Колхоза ертсе

пыракан чи аслă орган унăн членĕсен пĕрлехи пухăвĕ пулса тарать. Уставăн çак тĕп требованийĕсенчен эпир пĕр утăм та айккинелле пăрăнмастпăр. Колхозри тĕп ыйтусене пурне те колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ татса парать. Сăмахран, 1947-мĕш çулта эпир колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсене пурĕ 5 хут ирттертĕмĕр. Вăл пухусенче пурĕ 11 ыйту сӳтсе-яврăмăр, вĕсенчен 10 ыйту производство çинчен сӳтсе-явнă. Вăл ыйтусен шутĕнче çаксем пулнă: правлени отчетне тата ревизи комиссисен актисене çирĕплетесси, çурхи акана хатĕрленесси, çулталăкри производство планне тата тупăшпа расход сметисене çирĕплетесси, МТС-па тунă договора çирĕплетесси, ĕçшĕн тӳлемелли хаксемпе ĕçĕн çĕнĕ нормисем, обществăллă харпăрлăха сыхлассишĕн колхозниксем материальнăй ответ тытасси, тырпулсене пухса кĕме хатĕрленесси тата вĕсене пухса кĕртесси, тупăшсене валеçесси, тĕрлĕ фондсем тăвасси тата ыттисем те.

Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсене ирттерме правлени малтанах тĕплĕн хатĕрленет. Пухура мĕнле ыйтусем сӳтсе-явасси çинчен колхозниксене малтан радиопа тата бригадирсемпе звеньевойсем урлă пĕлтеретпĕр. Çакна пула, кашни колхозникпа колхозница пухура сӳтсе-явакан ыйтусем пирки хăйсен шухăшĕсене палăртса хума пултараççĕ. Пирĕн пухусем яланах активлă иртеççĕ, унта артель членĕсем хăйсен шухăшĕсем çинчен каласа параççĕ. Пухусенче конкретлă та колхоз хуçалăхне малашне татах аталанма май паракан решенисем йышăнатпăр. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсенче йышăннă решенисене пурăнăçа епле кĕртсе пынине правлени, колхозри пуçламĕш парти организацийĕ тата колхоз председателĕ тĕрĕслесе пыраççĕ. Правлени финанспа хуçалăх ĕçĕсене епле туса пынине яланах ревизи комиссийĕ хăй тĕрĕслет. Çаксене пула, пирĕн колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ йышăннă пĕр решенийĕ те пурăнăçа кĕмесĕр хут çине тăрса юлман, колхозниксен кашни пухăвĕ колхоз пурăнăçĕнче паллă вырăн йышăнса тăрать, вăл пухусем артель хуçалăхне татах ӳстерме май параççĕ.

Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсене эпир колхозниксенчен нумайăшĕсем ĕçрен пушаннă вăхăтра туса ирттеретпĕр. Çакна пула, пирĕн кашни пухурах колхозниксемпе колхозницăсен хисепĕнчен виçĕ пайĕнчен икĕ пайĕ ытларах пулаççĕ. Колхозниксен пĕрлехи пухăвĕ-

сем йышӑнакан решенисене кулленех ҫирӗппӗн пурӑнӑҫа кӗртсе пыни колхозниксен пухӑвӗсен авторитетне нумай хӑпартрӗ. Халӗ пирӗн кашни колхозниках: пуху ҫапла тума решени йышӑнчӗ пулсан, ӑна епле пулсан та пурӑнӑҫламалла пулать, тесе шутлать.

Иртнӗ ҫулхи январӗн 8-мӗшӗнче колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ пӗрсаслӑ пулса, колхозри ӗҫсенчен пӑрӑнса пурӑнакан, ӗҫ минимумне тултармасӑр пурӑннӑ Васянин Михаилпа унӑн арӑмне Васянина Ольгӑна колхозран кӑларма, вӗсен ҫурт вырӑнне туртса илме решени йышӑнчӗ. Ҫакӑн пек ҫирӗп мерӑна эпир колхоз производствинче ӳрӗк-сӳрӗк ӗҫленипе Васянинсем пирӗн пӗрлешӳллӗ хуҫалӑха мӗн чухлӗ те пулин сиен тума пултарнишӗн ҫеҫ мар, пуринчен ытларах колхозниксен массине вӗрентес шутпа, малашне кахалсем пирӗн артельте пурӑнма пултарайманнине кӑтартса парас шутпа йышӑнтӑмӑр. Ҫакӑн хыҫҫӑн колхозра ӗҫ дисциплини татах ҫирӗпленчӗ, ӗҫ тухӑҫлӑхӗ хӑпарчӗ, колхозниксем хамӑрӑн пилӗкҫуллӑх плана тултарассишӗн тата тӑрӑшарах ӗҫлекен пулчӗҫ. Колхоз пуҫланнӑранпа иртнӗ 19 ҫул хушшинче ҫакӑ ӗҫ минимумне тултарманнишӗн колхозран кӑларнӑ пӗрремӗш факт пулчӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн колхозра кунашкал факт пӗрре те пулмарӗ.

Пирӗн колхозниксем артель членӗсем пӗрлехи пухусенче мӗн каланисене уйрӑмӑнах тимлӗн итлеҫҫӗ. Пухусенче яланах актив, колхоз производствинче, сухаласа акас ӗҫре, выльӑх-чӗрлӗхсем патӗнче тӑрӑшса ӗҫлекен ҫынсем, обществӑллӑ ҫурт-йӗрсем тӑвакан ҫынсем, ертсе пыракан тӗп вырӑна йышӑнать. Пухусенче вӗсем усӑллӑ та тӗрӗс тата принциплӑ ыйтусем пирки сӑмах хускатаҫҫӗ. Сӑмахран, пухусенче Мишанина Мария, Сурова Юлия, Васянина Евгения, Жарков Николай, Плотников Аркадий сӑмах тухса калаҫҫӗ пулсан, вӗсене пурте тимлӗн итлеҫҫӗ, вӗсем сӗнекен шухӑшсемпе пӗркӑмӑллӑн пулса килӗшеҫҫӗ, мӗншӗн тесен вӗсем пурте колхоз производствинче ырми-канми тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ, хӑйсен ӗҫӗпе мӗнпур колхозниксене тӗслӗх кӑтартса пыраҫҫӗ. Асӑннӑ колхозниксемпе колхозницӑсем кунне 13—14 гектаршар тырӑ акаҫҫӗ, ҫурлапа кунне 0,18—0,20 гектаршар выраҫҫӗ.

Колхозниксен ĕçри активлăхне чакаракан фактсемпе тĕрĕс кăмăлпа ĕçлеменнисем çинчен малтан яланах актив пухăвĕнче сӳтсе-явса тишкĕретпĕр.

Сăмахран, актив пухăвĕнче эпир уй-хире тислĕк кăларасси мĕн пирки кая юлни çинчен, тырпула пухса кĕме хатĕрленесси мĕн пирки тăсăлса пыни çинчен сӳтсе-яватпăр пулсан, çак ыйтусене пĕтĕмĕшпе илсе мар, ĕçе чăрмантаракан уйрăм фактсене илсе тишкĕретпĕр, колхоз производствинче начар ĕçлекенсене хытă критикăлатпăр, вĕсене тăрăшса ĕçлекенсемпе танлашма хистетпĕр. Хăшпĕр чухне актив пухăвĕнче мĕн калаçнисене радиоузелтан радиопа паратпăр, унта мĕн-мĕн каланисене вара пур колхозниксемпе колхозницăсем те хăйсен килĕсенче итлесе лараççĕ. Хăйсен начар ĕçĕсем çинчен е мĕн те пулин лайăх мар туни çинчен активра сӳтсе-явнă хыççăн, вăл колхозниксем кайран хăйсем тунă йăнăша тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе пĕтерме, колхозри пĕтĕм çынсем умĕнче авторитетлă пулма тăрăшаççĕ.

Тӳрĕ кăмăлпа тăрăшса ĕçлекенсене эпир питех те чысласа хисеплетпĕр. Акнă, утă çулнă, тырă вырнă çĕрте социализмла ăмăртса ĕçлесе, пирĕн колхозниксемпе колхозницăсем хăйсен хастарлăхĕпе паттăрлăхне кăтартса параççĕ. Хăйсен кулленхи нормисене яланах 150—200 процент тултарса ĕçлекен Ф. Шамин, В. Васянин, А. Нараткина, П. Чигитова, К. Безрукова, М. Мишанин, Н. Жарков, Ю. Сурова колхозниксемпе колхозницăсен ячĕсене пур вăхăтра та колхозри Хисеп Хăми çинче курма пулать.

Пирĕн колхоз правленийĕ 9 çынтан тăрать. Правленине колхозри чи лайăх çынсене: А. Ф. Даманина, А. Д. Ашанина, П. П. Пупина, Ф. И. Мишанина, П. А. Гусева, М, П. Дорминдонтова, Н. Н. Леонтьева тата ыттисене те суйланă. Çак çынсем пурте колхозра нумай çул хушши ĕçлесе, колхозниксем хушшинче хăйсен авторитетне хăпартрĕç. Вĕсенчен хăшпĕрисене 1947-мĕш çулта пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕшĕн орденсем парса наградăланă.

Пур ĕçре те, пысăк ĕçре те, вак ĕçре те, колхоз правленийĕ активпа тачă пĕрлешсе ĕçлет. Правленире уй-хирсенчи мĕнле те пулин ĕçсене тăвасси çинчен сӳтсе-явмалла пулсан, эпир заседание яланах бригадирсемпе звеньевойсене чĕнетпĕр. Правлени ĕçне хутшăнса, вĕсем унта сӳтсе-явакан ыйтусем колхоз пурăнăçĕнче пы-

сăк вырăн йышăнса тăнине лайăх ăнланса илеççĕ. Правлени заседанийĕсене эпир уйăхра икшер хутран кая мар пухса irттеретпĕр. Иртнĕ çулта пурĕ 29 хут заседани туса иrттернĕ, унта 63 ыйту (организациллĕ ыйтусем—7, производствăллă ыйтусем—40) сӳтсе-явнă. Ялхуçалăхĕн паллă кампанийĕсене: çураки иrттерессi, тырпулсене пухса кĕртессi, государствăна тырă парасси тата çавнашкал ытти ыйтусене те эпир производство канашлăвĕсенче те пăхса тухса сӳтсе-яватпăр, çав канашлусене колхозри стахановецсене анлăн хутшăнтаратпăр.

Колхозăн администрацине управлени аппаратне эпир май пур таранччен пĕчĕклетрĕмĕр. Администрацине управлени аппаратне тытма эпир колхозра расходлама палăртнă мĕнпур ĕçкунĕсен хисепĕнчен 4 процента яхăн çеç расходлатпăр. Колхоз конторинче тăватă çын: бухгалтер, полевод-агроном, счетовод тата ĕçкунĕсене шута илсе пыракан учетчица ĕçлеççĕ. Колхоз касси витĕр çулталăк хушшинче пĕр миллион тенкĕ ытла укçа тухать пулин те, эпир уйрăм кассир тытмастпăр. Кассир ĕçне ĕçкунĕсене шута илекен учетчица хăех ăнăçлăн туса пырать.

Эпир колхозра çакăн пек йĕрке тунă: ĕç пĕтернĕ хыççăн кунсерен бригадирсем, звеньевойсем, фермăсемпе культурăпа çутĕç учрежденийĕсен заведующийĕсем каçпа колхоз конторине пухăнаççĕ. Çак канашлусенче эпир пĕр кун хушшинче тунă ĕçсен итогне тăватпăр, тепĕр кун мĕн ĕçлемеллисене палăртса нарядсемпе кăтартусем паратпăр.

Обществăллă харпăрлăх—кашни колхоз пурăнăçĕн никĕсĕ пулса тăрать. Артель организациленнĕренпе иртнĕ 19 çул хушшинче эпир обществăллă пуянлăха нумай ӳстертĕмĕр. Ăна сыхласа малалла татах ӳстерсе пырасси пирĕн тĕп задача пулса тăрать. Эпир колхозниксен пĕрлехи пухăвĕнче колхоз пурлăхне сыхласа упрасси çинчен ятарласа решени йышăнтăмăр. Çак решени тăрăх, бригадирсем, фермăсемпе хушма хуçалăх предприятийĕсен заведующийĕсем, колхозниксем хăйсене çирĕплетсе панă колхоз пурлăхĕшĕн материальнăй енĕпе ответ тытаççĕ. Обществăллă пурлăха тустарса çаратакансене эпир, артель Уставĕн 18-мĕш пункчĕ тăрăх, пĕрлĕхлĕ ĕçе пĕтерсе лартма хăтланакансем вырăнне хурса шутлатпăр. Обществăллă пурлăхпа усă курас ĕçре эпир хуçасăрлăха тĕппренех пĕтертĕмĕр. Фермăсемпе хушма хуçалăх предприя-

тийĕсен, уй-хир ĕçĕсен бригадисемпе культурăпа йăла учрежденийĕсен çурт-йĕрĕсемпе пурлăхĕсене эпир вĕсен руководителĕсене опись тăрăх ал пустарса паратпăр, çав опиçре çурт-йĕрсемпе пурлăхсем мĕн чухлĕ тăнине те çырса хуратпăр.

Бригадăсемпе фермăсенче пурлăха уйрăм колхозниксене ведомоçсем çине ал пустарса çирĕплетсе панă, вăл ведомоçсене эпир икшер экземпляр çыратпăр (пĕр экземплярĕ бригадăра, иккĕмĕшĕ — бухгалтеринче сыхланса упранаççĕ).

Хăйне çирĕплетсе панă артель пурлăхне тирпейлĕ тыткаламан пирки юрăхсăра кăларнăшăн, айăплă çынна эпир çав пурлăх инвентарь тăрăх мĕн чухлĕ тăнă хакне тӳлеттеретпĕр. Хăйне çирĕплетсе панă пурлăха хăйĕн айăпĕпе çухатакан çынна çав пурлăх тăракан хака виçĕ хут ӳстерсе тӳлеттеретпĕр. Уй-хирти тырра, çĕрулмине, пахчаçимĕçĕсемпе выльăх апатне, фермăри выльăх-чĕрлĕх продуктне ваккăн-тĕвеккĕн вăрланăшăн, ĕçе Халăх сучĕ пăхса тухса, айăплă çынсенчен вăрланă япаласемшĕн государство сутакан хакпа шыраса илетпĕр. Бригадăсенчи, фермăсенчи, хушма хуçалăхăн предприятийĕсенчи кӳлмелли хатĕрсемпе вак-тĕвек пурлăхсене хăйсем патне илсе кайса, вĕсене хăйсен япалисем вырăнне йышăннăшăн та, айăплисенчен çав хакпах шыраса илетпĕр.

Колхозăн тырпулĕсемпе пахчаçимĕçĕсене колхозниксем хăйсем усракан выльăхĕсене ярса ваттарнине эпир колхоз пурлăхне çаратнипе пĕр танах шутлатпăр. Выльăхсем ярса ваттарса çĕмĕрнĕ тырпулсемпе пахчаçимĕçĕсемшĕн выльăх хуçисенчен ваттарса çĕмĕрттернĕ тырпулпа пахчаçимĕçĕсемшĕн вунă хут ӳстерсе шыраса илетпĕр.

Обществăллă строительство валли илнĕ йывăçа е строительство материалĕсене колхоз правленийĕ хушмасăрах хăй патне турттарса кайса усă курнăшăн, айăплисенчен материал хакне пилĕк хут ӳстерсе шыраса илетпĕр.

Артель пурлăхне çĕтерсен, вăрласан, юрăхсăра кăларсан, кашни хутĕнчех акт çыратпăр, ăна çийĕнчех пурлăх тăнă хака айăплисенчен шыраса илме колхоз правленине паратпăр. Правлени çав акт тăрăх айăплисенчен мĕн чухлĕ шыраса илмелли суммăна палăртса бухгалтерине хут çырса парать, бухгалтери вăл сум-

мăна айăплă çынăн лицевой счечĕ çине çырса хурать, тупăшĕсене ĕçкунĕсем тăрăх валеçнĕ чухне, çав колхозник килĕшсен, вăл суммăна чакарать. Çав колхозник артель пурлăхĕн хакне тавăрасшăн мар, е пурлăх хакĕпе килĕшмест пулсан, вара артель правленийĕ вăл ĕçе халăх судне парать. Суд решени йышăннă хыççăн правлени колхозникран тырă тытса юлать.

Нумай вăхăт хушши усă курнипе юрăхсăра тухнă колхоз пурлăхне инвентарнăй счет çинчен акт çырса пăрахăçлатпăр, вăл акта малтан каллех колхоз правленийĕ çирĕплетет.

Вăрçă çулĕсенче кая юлнă колхозниксем хушшинче темиçе çул хушши тăрăшса ĕçлесе пухнă колхозăн обществăллă пурлăхĕпе усă курса пуйма шутланă çынсем те пулкаланă. Хальхи вăхăтра çакнашкал сиенлĕ шухăшсене тĕпренех пĕтерни. Çавнашкалах тĕрлĕ продуктсем укçасăр е йӳнĕ хакпа çырса парас йăлана та тĕп тунă.

Колхозăн обществăллă хуçалăхне аталантарса çирĕплетес тĕлĕшпе администраци енĕпе тĕрлĕ мерăсем йышăннипе пĕрлех эпир, колхозниксене обществăллă пурлăхпа артель ĕçĕсем çине социализмлă пăхма вĕрентес шутпа, вĕсем хушшинче массăллă ăнлантару ĕçĕсем туса ирттеретпĕр. Çак ыйтупа колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсемпе бригада пухăвĕсенче калаçусем ирттеретпĕр, колхозра пичетленсе тухакан многотиражка çине статьясем кĕртетпĕр, радио тăрăх калаçусем паратпăр.

Политикăллă ăнлантару тĕлĕшпе колхозри пуçламĕш парторганизаци пысăк ĕçсем туса пырать. Партипе правительство йышăнакан кашни постановлени çинчен эпир колхозниксен пĕрлехи пухăвĕсемпе бригадăсен пухăвĕсенче ăнлантарса паратпăр, çакăн çинченех агитаторсем кашни вунă хуçалăхри колхозниксемпе колхозницăсене пухса калаçусем ирттереççĕ. Çакăнпа пĕрлех агитаторсем колхозниксене ВКП(б) Центральнăй Комитечĕн февраль уйăхĕнчи Пленумĕ «Вăрçă хыççăнхи вăхăтра ялхуçалăхне вăйлатмалли мерăсем çинчен» йышăннă историллĕ постановлени çинчен, ялхуçалăхĕнче малта пыракансене Социализмлă Ĕç Геройĕ ятне парас тата орденсемпе медальсем парса наградăласси çинчен СССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ кăларнă указ çинчен, колхозăн пилĕкçуллăх планне пурăнăçа кĕртесси çин-

чен ăнлантарса параççĕ. Агитаторсем колхозниксене хаçат-журналсем те вуласа параççĕ. Çаксене пула, пирĕн колхозниксем ют çĕршывсемпе хамăр çĕршыври хыпарсем çинчен яланах пĕлсе тăраççĕ. Пирĕн агитаторсем хаçатсем çинчи материалсене хамăр колхозри ĕçсемпе çыхăнтарса пыраççĕ. Çаксем пурте агитаци ĕçĕн пахалăхне хăпартаççĕ. Агитаци ĕçне эпир яланах колхоза малалла çирĕплетсе унăн хуçалăхне пур енчен те аталантарассипе çыхăнтарса пыратпăр.



*Агитатор И. СТЕПАШИН колхозниксене хаçат вуласа парать.*

Партин пуçламĕш организацийĕ колхозăн пĕтĕм хуçалăх ĕçне тĕрĕслеее паха кăтартусем парса пырать. Колхозăн нумай енлĕ пысăк хуçалăхĕн пур отраслисенче те парти организацийĕ ĕçе организацилеме пулăшать, вăл ĕçре конкретлă ертсе пырать. Тĕрĕссипе илсен, колхозри парти организацине колхозăн пилĕкçуллăх планне пурăнăçа кĕртессишĕн кĕрешекен тĕп вăй пулса тăрать теме те пулать. Коммунистсемпе комсомолецсем колхоз производствинче ертсе пыракан ĕçсенче пурне те пример кăтартса тăрăшса ĕçлеççĕ, вĕсем колхозниксене сăмахпа та, хăйсен ĕçĕпе те колхоз умĕнче тăракан задачăсене ăнăçлăн пурăнăçлама мобилизацилеççĕ.

Ӑҫалхи ҫураки вăхăтĕнче кăна пирĕн агитаторсем-коммунистсем колхозниксем хушшинче политикăпа хуҫалăх ыйтăвĕсем тăрăх 73 калаҫу туса ирттерчĕҫ.

Иртнĕ ҫулта парти организацийĕ пĕтĕм коммунистсене (ҫак шутра администраципе управлени аппаратĕнче ĕҫлекен коммунистсене те) тырпулсене пухса кĕртмешкĕн мобилизацилерĕ. Парти организацийĕ кашни коммунист умне конкретлă задачăсем лартрĕ. Вăл кашни коммуниста тăрăшса ĕҫлесе пурне те пример кăтартса пыма, колхозниксене кулленхи ĕҫ нормисене ытлашшипех тултармашкăн хавхалантарса пыма, колхозниксене пысăк тухăҫлă тырпул туса илесси тырпулсене вăхăтра пухса кĕртнинчен нумай килни ҫинчен кулленех ăнлантарса пама хушрĕ.

Ҫак задачăсене коммунистсем чыслăн пурăнăҫларĕҫ. ВКП(б) членĕсем В. Саканина, Ӑ. Ситухина, Ф, Мишанин, И. Степашин тата ыттисем те малтанхи кунсенчех кулленхи заданисене ытлашшипех тултарса ĕҫлеме пуҫларĕҫ, нормăпа кунне 0,12 гектар вырас вырăнне вĕсем яланах 0,15—0,16-шар гектар вырчĕҫ. Ăнса пулнă ҫăра та ҫӳллĕ ыраша ҫакăн чухлĕшер вырма ҫăмăлах пулман. Ăнчах коммунистсем, каҫ пулсан та, кулленхи нормăна ытлашши тултармасăр ĕҫрен таврăнмастчĕҫ. Вĕсем ҫапла тăрăшса ĕҫлени тырпулсене пухса кĕрес ĕҫсен тухăҫлăхне хăпартма чĕнекен чăнчăн агитаци пулса тăчĕ тесен те юрать.

Вăл вăхăтра социализмлă ăмăртура малти вырăна ВКП(б) членĕ А. Фролова ертсе пыракан звено йышăнчĕ. Звеньевой А. Фролова, унăн звенинчи колхозницăсем А. Нараткина, Е. С. Ерошина, М. Оленица, В. Ерошина тата ыттисем те кулленех 0,15—0,17-шер гектар вырса, хăйсен участокĕ ҫинчи ыраша колхозра чи малтан вырса пĕтерчĕҫ, ҫакăн хыҫҫăн вĕсем ĕҫре юлса пыракан пĕрремĕш бригадăна та пулăшрĕҫ.

Ӑолхозăн пилĕкҫуллăх планне тултарассишĕн кĕрешес ĕҫре, колхозниксене социализмла харпăрлăхпа колхозри ĕҫсем ҫине социализмла пăхма вĕрентес ĕҫре колхозра пичетленсе тухакан «Сталинец» ятлă многотиражка пысăк вырăн йышăнса тăрать. Вăл колхозниксене ĕҫре малта пыракансен опычĕпе паллаштарать, ӳркенсе ĕҫлекен колхозниксене тишкерсе критикăлать, агротехникăпа зоотехника тата ветеринари ыйтăвĕсем

тăрăх статьясем пичетлет, яла çĕнетсе илемлетессишĕн кĕрешет. Ĕлĕкхи, революцичченхи вăхăтра Кольцовка ялĕнчи пурăнăç мĕнле пулнине аса илтерсе, пирĕн хаçат колхоз строительствин ӳсĕмĕсемпе çитĕнĕвĕсене анлăн çутатать, халхи пурăнăçран лайăх примерсем илсе артельти ĕçĕн паха енĕсене кăтартса парать.

Социализмла ăмăрту колхозри ĕçĕн тĕп меточĕ пулса тăчĕ. Парти организацийĕпе колхоз правленийĕ колхозниксене пурне те социализмла ăмăртăва хутшăнтарассишĕн тăрăшаççĕ. Çак тĕлĕшпе эпир социализмла ăмăрту ĕçĕ мĕнле пулса пынине анлăн çутататпăр, ун çинчен хаçатра нумай çыратпăр, ăмăртура малта пыракансен ячĕсене колхозри Хисеп Хăми çине кĕртетпĕр, куллепхи ĕçсен итогĕсене каçпа радио тăрăх пĕлтеретпĕр.

Социализмла ăмăрту ĕçĕ анлăн сарăлса пыни колхозниксен массисене кулленхи ĕç нормисене ытлашшипех тултарса пыма мобилизацилерĕ. Тырă акакан стахановецсем Александрпа Евгения Васянинсем, Н. Дормидонтов, Н. Жарков, В. Захаров вунвиçĕ ĕретлĕ сеялкăпа норма тăрăх кунне 6,5 гектар акас вырăнне кулленех 13,5 гектаршар акакан пулчĕç. МК-1100 молотилкăпа пĕр сменăра 12 тонна тырă çапма пулать. Авăн часрах çапса пĕтерес тесе пĕр-пĕринпе ăмăртса ĕçлесе, пирĕн бригадăсем пĕр смена хушшинче 25—30-шар тонна çапма пуçларĕç. Социализмла ăмăрту ĕçĕнче çитĕнӳсем тума уй-хирсенчи тĕп ĕçсенче кулленхи нормăсене ытлашши тултарса ĕçленĕшĕн хушса тӳлемелле туни нумай пулăшрĕ. Ытти колхозниксемпе танлаштарсан, ĕçри стахановецсене эпир ĕçшĕн нумай хушса тӳлетпĕр.

Ялхуçалăх артелĕн Уставĕ хушнисене пурăнăçа тĕрĕс кĕртсе пыни, уйрăмăнах, колхоз ĕçне ертсе пырас ĕçре демократи принципĕсене тĕрĕс пурăнăçласа пыни пĕтĕм колхозниксене колхозăн пилĕкçуллăх планне срокченех тултарассишĕн активлă кĕрешме, колхоз хуçалăхне малалла та аталантарса пырассишĕн кĕрешме мобилизацилеççĕ, хамăр колхозăн хуçалăх ӳсĕмĕсене пĕр чарăнмасăр хăпартса пыма пулăшаççĕ.

8.

**Кăçал тата малашнехи çулсенче те пирĕн колхоз хăйĕн умне татах та ответлăрах задачăсем лартать.**



*Печатница Р. ПАШИНА колхозри многотиражка хаҫата пичетлет.*

1948-мӗш ҫулта ялхуҫалӑхне татах та вӑйлатса хӑпартассишӗн пӗтӗм Совет Союзӗпе пыракан социализмлӑ ӑмӑртӑва хутшӑнса, эпир кӑҫал акса хӑварнӑ 550 гектар ҫӗр ҫинчи мӗнпур тӗштырӑ тӑрӑх кашни гектартан 180-шар пӑт тырӑ туса илме сӑмах патӑмӑр. Ҫак обязательствӑна пурӑнӑҫлас тӗлӗшпе эпир ырмиканми тӑрӑшса ӗҫлерӗмӗр. Ҫуркунне, ҫӗр ӑшӑнса ҫитичченех, калчасене минераллӑ удобренисемпе апат патӑмӑр. Эпир кашни гектар ыраш калчине 3—4 центнер аммиаклӑ селитра, 4 центнер суперфосфат, 1,5 центнер калиллӗ удобренисемпе апат патӑмӑр. Ҫуркунне кая юлса килчӗ пулин те, ҫурхи тырӑсене вӑхӑтра тата кӗске срокра акса хӑвартӑмӑр. Майӑн 9-мӗшӗ тӗлне колхоз ҫурхи культурӑсене пурне те акса пӗтерчӗ, ҫураки ӗҫӗсене пӗтӗмӗшпех пысӑк пахалӑхпа туса ирттерчӗ. Ҫураки ӗҫӗнче эпир агротехника кӑтартӑвӗсене пӗтӗмӗшпех пурӑнӑҫларӑмӑр. Ҫурхи тулла хӗреслӗ акрӑмӑр.

Малашне эпир кашни гектартан 18,0—20,0 центнер мар, 50,0-шер центнер тырӑ туса илес задача лартатпӑр. Ҫак тӗлӗшпе эпир халӗ агротехника кӑтартӑвӗсене

пурне те пурӑнӑҫа кӗртсе пыратпӑр. Шантарсах калама пулать: ҫак задачӑна эпир вӑрҫӑ хыҫҫӑнхи пӗрремӗш пилӗкҫуллӑх вӗҫлениччене пурӑнӑҫлатпӑр, пирӗн уйхирсен тухӑҫлӑхӗ тата пысӑкрах пулӗ.

Выльӑх-чӗрлӗх енӗпе эпир вӗсен йышне тата продуктивнӑҫне ӳстерес задача лартатпӑр. Пилӗкҫуллӑх планӑн юлашки ҫулӗнче пирӗн фермӑсенче 270 пуҫ мӑйракаллӑ шултра выльӑх, 150 пуҫ сысна, 1000 сурӑх, 1500 хур, кӑвакал, чӑх-чӗп пулать. 1947-мӗш ҫулта выльӑх-чӗрлӗхрен пурӗ 310 пин тенкӗ тупӑш илнӗ пулсан, эпир ҫак ҫулах выльӑх-чӗрлӗхрен пӗр миллион та вӑтӑр пин тенкӗ тупӑш илессе шанатпӑр. Хӑшпӗр ҫынсем пирӗнтен: эсир мӗнле майпа выльӑх-чӗрлӗхрен ҫакӑн пек пысӑк тупӑш илме шутлатӑр? тесе те ыйтма пултарӗҫ. Иртнӗ ҫулта пысӑк тухӑҫлӑ тырпул туса илни выльӑх апачӗн базине ҫирӗплетрӗ, вӑл выльӑх-чӗрлӗхӗн продуктивнӑҫне хӑпартмалли условисем туса пачӗ. Эпир ҫак ҫулах колхозра колбасси, сыр, копченка тата ытти продуктсем тума пултаратпӑр. Ҫаксем вара, выльӑх-чӗрлӗхрен илекен тупӑша нумай ӳстерме май параҫҫӗ.

Колхозӑн ҫак икӗ отраслине хӑпартнипе пӗрлех эпир пахчаҫимӗҫ, садри ҫимӗҫ паракан йывӑҫсене ытларах лартса тӑвас, хурт-хӑмӑр ӗрчетес ӗҫсене те анлӑн сарса пыратпӑр, ҫакӑнпа пӗрлех хамӑр колхозӑн хушма хуҫалӑхӗсене те аталантарса пыратпӑр.

Колхозӑн пилӗкҫуллӑх планӗнче эпир яла ҫӗнетсе илемлетес тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем туса иртерме палӑртрӑмӑр. Колхоза экономика енчен вӑйлатса пынӑ вӑхӑтра ҫак ыйту хальхи вӑхӑтра колхоз строительствинче пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Пурне те паллӑ, хальхи колхозник революцичченхи мужик пек мар. А. А. Жданов каланӑ пек «Россия халӗ ӗлӗкхи мар, вырӑссем те авалхи пек мар». Паянхи колхозник пуян кӑна мар, культурӑллӑ, лайӑх та илемлӗ ялта пурӑнма тӑрӑшать. Колхозӑн пилӗкҫуллӑх планӗн малтанхи икӗ ҫулӗ хушшинче тума палӑртнӑ ӗҫсене пурӑнӑҫланӑ хыҫҫӑн, эпир яла ҫӗнетсе илемлетес, колхозпа колхозниксен культурине хӑпартас тӗлӗшпе татах ҫӗнӗ ӗҫсем тума тытӑнтӑмӑр. Кӑҫал колхоз клубне тӗпренех ремонтларӑмӑр. Клуба ремонтласа ун валли ҫӗнӗ инвентарьсем илме колхозниксен пӗрлехи пухӑвӗ йышӑннӑ тӑрӑх 100.000 тенкӗ расходлама кӑтартнӑ. Ҫак ҫулах эпир колхозра

канмалли ҫурт тума шутлатпăр, колхозри ача яслине ҫěнěрен ěҫлеттерме пуҫлатпăр, колхоз библиотекине валли ҫěнě литературăсем илетпěр, яла йывăҫсем лартса илемлететпěр.

Колхозăн ҫак ҫитěнěвěсем мěнпур колхозниксем тата колхозницăсем лайăх, ырми-канми ěҫленипе пулнă, вěсем Социализмлă тăван ҫěршыва парăнса ěҫлеҫҫě. Пирěн колхоза ВКП(б) обкомě тата Чăваш АССР Министрěсен Совечě пулăшу парса тăраҫҫě.

Ленинпа Сталинăн аслă партийě ертсе пынипе, Сталин юлташ кăтартса панă колхоз ҫулěпе пырса, эпир колхоз умěнче тăракан задачăсене чыслăн пурăнăҫлатпăр. Кун пирки пирěн нимěнле иккěленӳсем те ҫук.

Чувашская книжная палата г. Чебоксары Чувашской АССР

Редактор *А. Митрофанова.* Техн. редактор *И. Григорьев.*

НТ 04412. Подписано в печати 20/XII. 1948 г. Объем 3,25 п/л
Заказ 1687. Тираж 7000 экз.

Отпечатано в типографии № 1 Управл. полиграфпромышленности
при Совете Министров Чувашской АССР.
г. Чебоксары, ул. Володарского, 5

Цена 1 руб.

С. К. КОРОТКОВ

# ОПЫТ РАБОТЫ колхоза имени СТАЛИНА

Чувашгосиздат—1949

